ПЁТЁМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕРЕ!

# КОММУНИЗМ ЯЛАВЁ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул
Декабрь
12
ШӐМАТКУН
№ 242 (9151)

Хакӗ 20 пус.
36-мӗш ҫул тухать.

## Паянхи номерта

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНӐЙ СОВЕЧЕН ПИЛЛЁКМЁШ СЕССИЙӖ. Информацилле пёлтерӳ. Сесси дневникӗ (1 стр.).

**СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Указӗ. А. Я. Вышинскийӑн юлташа Ленин орденӗпе наградласа ҫинҫен** (1 стр.).

ССР СОЮЗӖНЧИ ХАЛАХСЕН ҪӐВАНЛА ҪЕМИНИЧЕ. М. Гречуха.—Украинӑна халӑхӗн телейлӗ пурнӑҫӗ (2 стр.).

**И. Мешков.**—Колхозниксене пурлӑх енӗпе ытларах интереслентерме тӑрӑшмалла (2 стр.).

**Г. Семенов.**—Пайщиксен пухӑвӗ (2 стр.).

ДОСААФ организацийӗн конференцийӗ (2 стр.).

Кӑпкӑн страници (3 стр.).

ООН Генеральнӑй Ассамблейин VIII-мӗш сессийӗ (4 стр.).

Генеральнӑй Ассамблея ӗҫлеме чӑрӑнӑ (4 стр.).

Президент Эйзенхауэр ООН Генеральнӑй Ассамблейин пёрлехи ларӑвӗнче декабрӗн 8-мёшёнче калана сӑмах (4 стр.).

Моссовет ячёпе тӑракан театрӑн Румынири гастролёсем (4 стр.).

# Совет аппаратӗн ӗҫри культурлӑхёшён

Коммунизм обществи тӑвас историллё задачӑна тата парассинче Совет государстви вӑйлӑ хёпӑнаш пулса тӑрать. Социализмла государствӑна пур енчен те сирёплетессине Коммунистсен партийӗ хёрём чи пысӑк та хисеплё тивёҫё тесе шутлать.

Совет государстви хуҫалӑха организацилесе пырас, культурӑна ӗҫлесе, ӗҫсӑмлинсене воспитани парас, обществӑлла харшӑрӑхса сыхласа ҫурас, ҫёршывра ташмансенчен сыхлас, ёҫсене пурнӑҫласа тӑрать. Сак ёҫсене Ленин хӑй тивёҫлё ӗҫ тесе шутлатчё. Ленин ӗҫлеме государство аппаратӗ кирлё. Государство строительстви наукӑлла принципсенче, В. И. Ленин тата И. В. Сталин туса хатёрленё принципсене, ёҫе кёртсе пырса, Коммунистсен партийё государство аппаратё лайӑхрах ёҫлесёр тесе хытӑ тӑрӑшать.

Совет государстви аппаратё социализмла революци ҫёнтёрнине, буржуазла государство аппаратне арканпине пулса тӑнӑ. Сак аппарат вара буржуазла государство аппаратёнчен тёпренех урӑхла. Буржуазла государство аппаратё эксплуататорсен интересёсене хӳтёлет, халӑх массисене хёсёрлет, ёҫсӑмлисемён тӑшманла вӑй пулса тӑрать. Совет государстви аппаратё вӑл—чӑн-чӑн халӑх власён аппаратё. Ана пётём халӑх туса хунӑ, вӑл халӑх ирённе пурнӑҫа кёртсе пырать. Пирён государство аппаратёнче работниксем халӑх тарҫисем пулса тӑраҫҫё.

Пирён государство аппаратё, социализмла государствӑн задачисене функцийёсем уҫӑлнса пынӑ май, тӑтӑшах уҫӑлнса, ҫёнелсе пынӑ. Юлашки вӑхӑтра партин правительство государство аппаратне тата та лайӑхлатнӑ, ӑна ҫавӑнпӑҫлӑ ёҫлевен тата ӳҫӗрех ларакан тума чылай мёрёсем ёшшинчё. СССР Министрёсен Совечё министерствёсене, ведомствёсене тата ытти пур учреждени-сенче те ёҫ кунён ҫирёп режимне тӑвасси ҫинчен постановленисем ёшшинчё. Правительство государство аппаратне — кашни совет учрежденине, Пётём Союзри учреждени-пе пуҫласа ялти учреждени-сем — конкретлё, ӳсӗллё, пуҫаруллё, ёпкеллё ёҫлеме, ҳуҫалӑха культура строительствине ӗҫтех пырас ёҫре тухса тӑракан ыйтусене хӑварт та вёҫне ҫитнех тата пама пултаракан туна тӑрӑшать. СССР Верховнӑй Совечён иккёмёш сессийён решенийёсеме КПСС Центральнӑй Комитечён сентябрь Пленумён постановленийёнчен совет аппаратёнче работникёсем умне пысӑк та ответлё задачӑсем тухса тӑраҫҫё.

Совет аппаратёнчен — министерствёсене управленисенчен пуҫласа ялти учреждени-сем тараван — хӑйён ёҫри культурине сӳтти пусӑма хӑпартас пулать. Кулленхи ёҫе лайӑхлатассишён, пур ыйтусене те вӑхӑтра тата парассишён, практикӑлла строительствине ертсе пырас ёҫре тухса тӑракан ыйтусене хӑварт та вёҫне ҫитнех тата пама пултаракан туна тӑрӑшать. СССР Верховнӑй Совечён иккёмёш сессийён решенийёсеме КПСС Центральнӑй Комитечён сентябрьти Пленумён постановленийёнчен совет аппаратёнче правительство государство аппаратне тата та лайӑхлатнӑ, ӑна ҫавӑнпӑҫлӑ ёҫлевен тата тӑрӑшакан туна тӑрӑшать. Ертсе пырасси вӑл резолюцисем ҫырса, директивӑсем ярса ларассипе ӑна пулмасть. Ертсе пырас тени вӑл директивӑсене пурнӑҫласа пынине тӑтӑшах тёрёслесе тӑмалланине пёлтерет. Директивӑсене ертсе ёҫлесе ёҫре кёртнине тёрёслеме тёлёнмё — ҫитменлёхсене палӑртасси, йёркесёрлёхсене тӑрӑ шине кёларасси, ёҫсӑмлисене канашсем парса пулӑпасси, ӳсапма пултарайман ҫынсене ответ тыттарасси, решенисене пурнӑҫламалла тӑвасси пулса тӑрать. Совет влайён пур организменне те—ҫӑтен пуҫласа ялта ситниченех — решенисене пурнӑҫласа пынине контроллесе тӑрас ёҫе лайӑхлатмалла, учреждени-сенче руководительёсеме партпрганизацисен ответлӑхне тытармелле.

Сӑвӑнпа пёрлех кадресене тёлёнё сӳлласа илес, воспитани парас ёҫе лайӑхлатас пулать. Совет служащийёсене социализмла Тӑван ҫёршыва чёререн парӑнса ёҫлеме, хушнӑ ёҫе пётём вӑя хурса, ёҫ ёҫ государствӑшӑн пысӑк пёлтерёшлё пулнине ӑнланса илсе туса пынӑ вёрентмелле.

Совет учрежденийёсенче ёҫ кунён режимне сирёплетиё хыҫҫӑн служащисене политиккӑла тата культурӑлла воспитани парас ёҫе вӑйлатма усламасси лайӑхланнӑ ҫӗҫ. Кашни служащин пёр-пёр кружокра е политшкулта, заочнӑ пёркеле ҫе харшӑ ҫӑй тёлёнё вёрентёр. Совет аппаратёнчи работникӑн политиккӑла пёлёнёсем мён чухлё пысӑкрах пулассӗ, унӑн ёҫё те ҫавӑн чухлё ӑнӑҫлӑрах пулса пырать. Кадресене марксистла-ленинла воспитани пани совет аппаратён ёҫне тёпренех лайӑхлатма, унӑн ёҫри культурине ӳстерме, ответлӑха ӳстерме пулӑшать.

Хуҫ урлӑ ертсе пыракспне, канцелярилле-бюрократла меслетсене тёпшинех пётермелле. Учреждени ёҫне конкретлӑн тата оперативлӑн ертсе пымалла. Тума тивёҫлё ёҫе вёҫне ҫитермелле. Массӑсем ҫине таянса, вёсен сёнёвёсене, халтан килекен критикӑна шута илсе ёҫлеменлле. Учреждененче ёҫ кунне лайӑх организацилемелле, унта тасалӑха пёрлелёх пулӑпа, кашни служащи ёҫ вӑхӑтёнче пулинн ҫук курса ёлетёр, унӑн ёҫё пысӑк тухӑҫлӑ пултӑр, ёҫсӑмлисен ыйтӑвёсене вӑл сиплёнчех тата пама тӑрӑштӑр.

## ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНӐЙ СОВЕЧЁН ПИЛЛЁКМЁШ СЕССИЙӖ

### *Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён 1953 ҫулхи декабрён 11-мёшёнче пулнӑ ларӑвё ҫинчен*

## *ИНФОРМАЦИЛЛЕ ПЁЛТЕРӲ*

Декабрён 11-мёшёнче, 17 сехетре, Шупашкарта Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён пилёкмёш сессийё уҫӑлнӑ.

Сессине Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён Председателё **С. М. Ислюков** депутат уҫнӑ.

Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён Председателё С. М. Ислюков депутат сессине пӑхса тухма сак ыйтусене тӑратни ҫинчен пёлтерет:

1. РСФСР Министрёсен Совечё «Чӑваш АССР Министрёсен Совечён ёҫёсем ҫинчен» ёшшинна постановлени.

Ку ыйтӑва Чӑваш АССР Министрёсен Совечё тӑратнӑ.

2. Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумён Указёсене ҫирёплетесси.

Ку ыйтӑва Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗ тӑратнӑ.

**И. П. Патров** депутат сӑтӑнне Верховнӑй Совет пурте пёр сассӑ пулинне сак ыйтусене ҫури ёёркине кёртме ёшшинна.

Утпан Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён Председателё С. М. Ислюков депутат РСФСР Министрёсен Совечё «Чӑваш АССР Министрёсен Совечён ёҫёсем ҫинчен» ёшшинна постановлени пирки доклад тума Чӑваш АССР Министрёсен Совечён Председателне **И. А. Афанасьев** депутата сӑмах панӑ.

Ку ыйтӑва Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗ тӑратнӑ.

РСФСР Министрёсен Совечё «Чӑваш АССР Министрёсен Совечён ёҫёсем ҫинчен» ёшшинна постановлени пирки туна докład тӑрӑх пренире ҫыхсем тухса калаҫнӑ: **Н. Н. Никитин** депутат (Чкаловскин районё, Патӑрьел округё), **О. Ф. Мадюшкина** депутат (Хёрлё Чутай районё, Хурашаш округё), **А. А. Симакова** депутат (Улатар хули, Сталински округ), **Н. Д. Албутов** депутат (Канаш районё, Карӑмӑл округё), **М. Ф. Филиппова** депутат (Куславкка районё, Куславкка округё), **Н. Д. Волков** юлтан (Шӑмӑрпа районёнчи Коммунальнӑй ҳуҫалӑх министрё), **А. Е. Васильев** юлтан (Шӑмӑрпа районёнчи исполкомён председателё).

Сӑвапна Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён иккёмёш ларӑвё хушнӑ. Ситес лару декабрён 12-мёшёнче, ирхине 10 сехетре пуҫланать.

## СЕССИ ДНЕВНИКӖ

Ешер Советсен Ҫурчён ларуесен залёнче Чӑваш Автономилле Советлӑ Социализмла Республикинн Верховнӑй Совечён пилёкмёш сессийё уҫӑлчё.

Кӑҫăне 5 сехет. Правительство ложинесенче вырăнсене Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумён членёсем, министрсем ёшшӑнаҫҫё.

Председатель сётёлё умёнче — Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён председателё **С. М. Ислюков** депутат, Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён председательён заместительёсем **О. Ф. Мадюшкина** тата **Н. Ф. Смыслов** депутатсем.

С. М. Ислюков депутат Чӑваш АССР Верховнӑй Совечён пилёкмёш сессине уҫать, сессине сӳтсе явма ҫакăн пек мёнтёрлесе тӑратни ҫинчен пёлтерет:

1. РСФСР Министрёсен Совечё «Чӑваш АССР Министрёсен Совечён ёҫёсем ҫинчен» ёшшинна постановлени.

2. Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумён Указёсене ҫирёплетесси.

Унтан С. М. Ислюков юлтан кун пёрлехи пёрремёш ыйтӑва докład тума республика Министрёсен Совечён председательне **И. А. Афанасьев** юлтана сӑмах парать.

Докладчик 1953 ҫулти ноябрён 11-мёшёнче Чӑваш АССР Министрёсен Совечён ёҫёсем ҫинчен РСФСР Министрёсен Совечё отчет илнине решени ёшшинни ҫинчен пёлтерет, ҫав решение вуласа парать.

— РСФСР Министрёсен Совечён постановленийёне,—тет маҫалла П. А. Афанасьев юлташ,—пирён республикăн Министрёсен Совечён ёҫне тёрёс хак панӑ. Хуҫалăхпа культура строительствипе ҫутă ҫёр ҫинчен те сӳтсе явса, Федерацин правительстви Чӑваш АССР Министрёсен Совечён ёҫне ҫителёкёр тесе ёшшинна.

Республикăн Министрёсен Совечён ёҫёнче ялхуҫалăхне ертсе пырас енёпе ӳпрăмах пысăк йăнăшсемпе ситменлёхсем пур. Сёрпе ҫанталăк условийёсем лайăх, колхозсенче ёҫ вăйё сителёкёр. Ҫав условисемпе колхозсенче нумай отрасльте хуҫалăха ачалантарма ҫителёкёр усă курнă. Пирён республикăра ёҫлеме пултаракан кашни колхозника, вăтам шутпа, акмалли сёрт 2,9 гектар тивет,—РСФСР-ӑн 3 гектар тивет. Ёҫ вăйёне вăтăрах усă курсан тата ялхуҫалăхёнчи ёҫсене механизацилесе пырсан, хуҫалăхăн вăй нумай ыйтăван отрасльесене—техникăлла культурăсем, пахча симёс, вылăх ачачёк культурёсем акса-лартса тăвас ёҫе аталантарма май килет. Ҫапах та ку отрасльсем вăрăхăн аталанса пыраҫҫё. Колхозсен акмалли пётём ҫёр лаптăкёнче чёс. Кашни служащи пёр-пёр кружокра е политшкулта, заочнă пёркене ҫе харшăр ҫăй тёлёнё вёрентёр. Совет аппаратёнчи работникăн политиккăла пёлёнёсем мён чухлё пысăкрах пулассӗ, унăн ёҫё те ҫавăн чухлё ăнăҫлăрах пулса пырать. Кадресене марксистла-ленинла воспитани пани совет аппаратён ёҫне тёпренех лайăхлатма, унăн ёҫри культурине ӳстерме, ответлăха ӳстерме пулăшать.

Ҫурăнма хатёрленес ёҫре ситменлёхсем пуман. Чылай колхозсен тёштёрёв, техникăлла, вылăх ачачёк культурăсен вăрăлăхёсем, ҫёрулми вăрлăх ситмеҫҫё, трактор семене ялхуҫалăх машинине ювас ёҫ сителёкёр пулса пынать.

— Ялхуҫалăх министрстви руководительёсем Мартыновпа Захаров юлташсем МТС-сене тата колхозсене лайăхрах ертсе пынă пулсан,—тет докладчик,—ситменлёхсем сахалтарах пулнă пулёччё. Вёсем ялхуҫалăке аталантарас ыйтусене конкретлă тата оперативлă тата памаҫҫё. Министрствăри специалистсем ответлăхе ёҫтерсе пымаҫҫё, вёсем колхозсене пулнă чухне ёҫе тёпёл пёлме, ситменлёхсене пётерме сителёкёр тăрăшаҫҫё.

Министр ёҫёсене тума пыракан Захаров юлташ МТС-сен ёҫёсене урăхлатса сёнетессине, ялхуҫалăхăнчи ёҫсене комплекслă майпа пёрлекелесне халиччен те туса ҫитермен. Сак сăлтава пуҫа МТС директорёсем нумайăшё, уйрăмах Чкаловски МТС директорё Степанов юлташ, Шуплой МТС директорё Чупраков юлташ халё те вылăх-чёрлёх ёрчетесе ыйтусене ёҫлеме тытăмман, хăйсен ёҫёсене КПСС Центрăлăлăй Комитечён Пленумё хушнă пек урăхлатса ҫёнетмен.

Афанасьев юлташ хăйён докладёнче МТС-семпе колхозсене ҫурăкине хатёрлес, вылăх-чёрлёхе лайăх кăсăрлалма тăвас мёнтёрлесе ҫитнех тата ҫирёплетмен. Ҫапла ҫитменлёхсем ҫинчен тёплён каласа парать. Колхозсене 1953 ҫулхи ёҫсем отчёнёсене туса пынă. Колхоз правленийёсен полномочийёсене тухнă колхозсенче суйлавсем иртнипе пуҫăлмалла. Ертсе пыракан кадресене тёпчесе суйласа илес, уйăрса лартмалла, колхозсене 1954 ҫулхи производство планёсене тата тăшăнсенне расходен сметисене вăхăтра хатёрлесе пуҫăлас пулать.

Чӑваш АССР Министрёсен Совечён ёҫёнче промышленноҫа ертсе пырас енёпе те пысăк ситменлёхсем пур. Республикăн промышленности продукци туса кăларнăлан планă 1953 ҫулăн 11 уйăх хушшинче иртнресе тухтарăмăр, пёлтёрпине танлаштарсан 19,2 процент ытларах продукци туса кăларнă. Ҫапах та нумай предприятисем ҫулталăкăн план планёсене пурнăҫламан. 1953 ҫулăн 10 уйăхри плана республикăри 142 предприяти, ҫав шутра Вырăнти тата топливо промышленности министерствин 21 предприятинё, Апатҫемёр тăвăрёсен промышленности министерствин 17 предприятинё, Чăвашпромсоветăн 77 артелё тухтарăмăн.

СССР Верховнăй Совечён пиллёкмёш сессинёнче Г. М. Маленков юлтан продукци пахалăхне лайăхлатассишён кёрешесси социализмла промышленноҫăн чи пысăк задачисенчен пёри пулса тăнине кăтартса пачё. Пирён республикăри министерствёсене управленисем ҫак кăтартăка сителёкёрёп пурнăҫласа пыраҫҫё. Вырăнти тата топливо промышленности министерствин 21 предприятинё, Апатҫемёр тăвăрёсен промышленности министерствин 17 предприятинё, Чăвашпромсоветăн 77 артелё тухтарăмăн.

Пирён республикăра Министрёсен Совечён отчетне итленё хыҫҫăн, РСФСР правительствин тата Чăваш АССР ҫулхăнне-лалла аталантарманни ҫинчен ҫирёплетмен постановленни ёшшинчё. Сак постановленипе Чăваш АССР-ён ҫулхăнне культурăн пур отрасльесене те питтех те пысăк пулăшу пама палăртнă. Пирён задача РСФСР правительствин постановленийёнчен пур пункчёсене те палăртнă срокра пурнăҫлама тăрăшасси пулать.

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Министрёсен Совечён отчетне РСФСР правительствин итлесе сётсе явни пирё ёҫри пысăк пулăшу пани пулса тăрать. Энпи халё хамăрăн ёҫри ситменлёхсене тата хамăрăн ялхуҫалăхе, промышленноҫа тата культурăна хăвăрт вăйлатма ҫул курмалли мёнёке лайăхрах куратăр.

Чăваш АССР Министрёсен Совечё хăйён ёҫёе партин XIX-мёш съезчён, КПСС Центрăлăлăй Комитечён сентябрьти Пленумён решенийёсенчен хушнă пек уйăрăлса ҫитнех ҫинчен, КПСС Центрăлăлăй Комитечё ёҫре пынипе республикăра хуҫалăхпа культура строительстине вăйлатма пур майсемпе те тăрăшасси ҫинчен Верховнăй Совета шанăпара калатăр.

И. А. Афанасьев докладчă тăрăх прени пуслanнё.

Паян сесси хăйён ёҫне малалла тăнать.

## *СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Указӗ*

### А. Я. ВЫШИНСКИЙ ЮЛТАША ЛЕНИН ОРДЕНЕПЕ НАГРАДЛАСАСИ ҪИНЧЕН

СССР Юҫ ҫёршыв ёҫёсен министрёпе тёрёслетекелё А. Я. Вышинскийӑн юлташ ҫуралнӑранпа 70 ҫул тулнӑрпа ӑй тата вӑя Совет государстви умёнче ыпҫах ёҫлесе, Андрей Януарьевич Вышинскийӑн юлташа Ленин орденёпе наградласа.

**СССР Верховнӑй Совет Президиумён Председателӗ К. ВОРОШИЛОВ.**
**СССР Верховнӑй Совет Президиумён Секретарӗ Н. ПЕГОВ.**

Мускав, Кремль. 1953 ҫулхи декабрён 9-мёшё.

*ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванла ҫемйинче*

# Украина халӑхӗн телейлӗ пурнӑҫӗ

**М. ГРЕЧУХА,**
*Украина ССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ*

Совет Союзӗнчи халӑхсем пурте, партин XIX-мӗш съездӗн тата КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн историллӗ решенийӗсемпе хавхаланса, коммунизм тумалли аслӑ программӑна анӑҫлӑ пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Совет обществин ҫул кӑтартса ертсе пыракан вӑйӗ пулса тӑракан Коммунистсен партийӗ пирӗн социализмла Тӑван ҫӗршыва халӑх хуҫалӑхӗпе культурӑн ҫӗнӗрен вӑйлатмалли, ССР Союзӗнчи ӗҫҫыннисен пурнӑҫне пӗрмаях лайӑхлатмалли, Совет государствин хӑватне малалла тӗреклетмелли ҫулпа шанчӑклӑн ертсе пырать.

Халӑхсен пӗртанлӑхӗпе туслӑхӗ ҫинче никӗсленсе тӑракан нумай нацилле Совет государстви коммунизм строительствин хӑватлӑ орудийӗ, социализмла нацисене ирӗклӗ пурӑнма, чечекленсе ӳссе пыма май паракан оруди пулса тӑрать. Капитализмла ҫӗршывсенчи ӗҫҫыннисем те социализмла государствӑра пурнӑҫланине пирӗн те пурнӑҫласчӗ тесе ӗмӗтленеҫҫӗ. Пирӗн социализмла государство—пӗтӗм тӗнчери мирлӗ пурнӑҫӑн ҫирӗп терӗкӗ.

* * *

Аслӑ Совет Союзӗн уйрӑлми пайӗ пулса тӑракан советла Украинӑн пурнӑҫне пысӑк пӑхсан, халӑхсен тӑванла туслӑхӗ калама ҫук пысӑк вӑй пулни, Коммунистсен партийӗн ленинла-сталинла наци политики чаплӑ ҫитӗнӳсем туни, уйрӑмах уҫҫӑн курӑнать. Октябрьти Социализмла Аслӑ революци пуличченхи вӑхӑтра Украина кая юлнӑ, ҫурма колонилле ҫӗршыв пулнӑ пулсан, вӑл Совет влаҫӗ пулнӑранпа чечекленсе ӳссе пыракан индустриллӗ-колхозлӑ Совет республики пулса тӑчӗ. Хӑватлӑ Совет Союзӗнче украина халӑхӗ чӑн-чӑн ирӗклӗхне пикама пӑхӑнманлӑх иначӗ, вӑл хӑйӗн ӗмӗрхи ҫӗрӗсене пӗтӗмпех пӗрлӗхлӗ Украина Советлӑ государствӑра пӗрлештерчӗ, ССР Союзӗнчи мӗнпур халӑхсемпе пӗрле коммунизм строительствине анӑҫлӑ пурнӑҫласа пырать, мире тата халӑхсен хӑрушсӑрлӑхне ҫирӗплетессишӗн активлӑ кӗрешет.

Пирӗн халӑхӑн хаяр тӑшманӗсем—Украинӑри буржуалла националистсем украина халӑхӗ аслӑ вырӑс халӑхне шанмасӑр пурӑнтӑр, унпа хирӗҫсе кайтӑр тесе, ССР Союзӗнчи халӑхсен тӑванла туслӑхне хавшатса ярас тесе пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшнӑ. Коммунистсен партийӗ украина халӑхне Украинӑри буржуалла националистсен тискер пайӑкла сӑн-сӑпатне палласа илме тата ҫав ылханлӑ сутӑнчӑксене, пӗтӗм тӗнчери империализмӑн ирсӗр агенчӗсене ҫӗмӗрсе тӑкма пулӑшрӗ. Советла украина халӑхӗ ССР Союзӗнчи халӑхсен ленинла-сталинла туслӑхӗшӗн хытӑ тӑрать, украина халӑхӗпе вырӑс халӑхӗ тата хамӑр ҫӗршыври мӗнпур халӑхсем хушшинчи ӗмӗртэнпе ҫирӗпленсе пынӑ туслӑха сыхласа усрать.

ССР Союзӗнчи халӑхсен никам пӑсайми туслӑхӗ Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр тӗрӗслев витӗр тухрӗ, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче халӑх хуҫалӑхне юсаса малалла аталантарассишӗн кӗрешнӗ вӑхӑтра тата ытларах ҫирӗпленчӗ. Совет Союзӗ пысӑк пулӑшу пани ҫине таянса, аслӑ вырӑс халӑхӗ тата ССР Союзӗнчи мӗнпур халӑхсем тӑванла пулӑшса пынипе, Советлӑ Украина вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ишӗлчӗкрен хӑвӑрт тухрӗ, социализмла экономикӑпа культурӑна аталантарас ӗҫре чылай ҫитӗнӳсем тума пултарчӗ.

Донбасри тата Днепр тӑрӑхӗнчи металлурги завочӗсене техникӑлла ҫӗнӗ никӗс ҫинче юсаса ҫӗнетнӗ, халӗ вӗсем вӑрҫӑ умӗнхи вӑхӑтринчен ытларах металл парса тӑраҫҫӗ Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра республикӑн машинӑсем тӑвакан промышленноҫӗ вӑйланчӗ, ҫӗнӗ техникӑпа пуянланчӗ, вӑл машинӑсем, станоксем тата механизмсем туса кӑларасине ҫултан ҫул ӳстерсе пырать. Украина ССР-ӗнчи машинӑсем тӑвакан промышленность продукци туса кӑларасси, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, икӗ хут ытла ӳснӗ. Уйрӑммӑн илсен, тракторсем туса кӑларасси 2,5 хут, трактор плугӗсем туса кӑларасси—2 хут ытла, трактор сеялкисем туса кӑларасси—7 хута яхӑн ӳснӗ. Хӑватлӑ тепловозсем, кӑмрӑк кӑлармалли комбайнсем, утакан экскаваторсем тата ытти кӑткӑс машинӑсем нумай туса кӑларма тытӑннӑ,—ун пек машинӑсене иртнӗ вӑхӑтра пирӗн промышленность туса кӑларман.

Горняксем паттӑр ӗҫленипе тата партипе правительство ҫӗр кӑмрӑк промышленноҫне аталантарассишӗн куллен-кун тӑрӑшнипе Донбасс халлех ӗнтӗ Совет Союзӗнчи чи лайӑх механизациленӗ пысӑк ҫӗр кӑмрӑк бассейнӗ пулса тӑчӗ, халӗ вӑл ҫӗршыва 1940 ҫулхинчен чылай нумайрах ҫӗр кӑмрӑкӗ парса тӑрать.

Пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх плана хӑвӑртрах пурнӑҫлассишӗн социализмла ӑмӑрту анлӑн саралнӑ никӗс ҫинче промышленность работникӗсем кӑҫалхи программӑна анӑҫлӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Пиншер предприятисем, рудниксемпе шахтӑсем ноябрь уйӑхӗ иртиччен чылай малтан кӑҫалхи 11 уйӑхри программӑна пурнӑҫларӗҫ, 1953 ҫулхи плана срокчен пурнӑҫлассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Коммунистсен партийӗ пӑхса ӳстернӗ совет ҫыннисен паттӑр ӗҫӗнче вӗсен патриотла туйӑмӗ—хамӑр халӑх валли ытларах тата лайӑхрах ӗҫлес кӑмӑл, юратнӑ социализмла Тӑван ҫӗршыв хӑватне малалла тӗреклетме тӑрӑшни уҫҫӑн курӑнса тӑрать.

Йывӑр промышленноҫа аталантарас ӗҫре ҫитӗнӳсен никӗсӗ ҫинче халӑх валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑларакан промышленность те чылай ӳсрӗ. Республикӑри ҫӑмӑл тата апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ 1953 ҫулхи 9 уйӑх хушшинче, иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтрипе танлаштарсан, таварсем 13,4 процент нумайрах туса кӑларнӑ, таварсен ассортиментне нумайлатнӑ.

СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ халӑх валли куллен кирлӗ япаласем туса кӑларассине хӑвӑрт вӑйлатас, пахалӑхне лайӑхлатас тӗллевпе йышӑннӑ решенисем республикӑри промышленность работникӗсене ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарчӗҫ.

* * *

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче фашистла нимӗҫ захватчикӗсем Украинӑри ялхуҫалӑхне уйрӑмах йывӑр сиен кӳнӗ Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе Совет Союзӗн правительстви Украина ССР-ӗн ялхуҫалӑхне вӑйлатма питӗ пысӑк тимлӗхпе пулӑшса пыраҫҫӗ. Украинӑра машина-трактор станцийӗсем тата специализациленӗ станцисем 1.347 ӗҫлеҫҫӗ, вӗсен, вӑрҫӑ умӗнхи вӑхӑтрипе танлаштарсан, тракторсем 68 процент тата комбайнсем 63 процент ытларах шутланаҫҫӗ. Юлашки икӗ ҫул хушшинче пирӗн республика вунщар пин ҫӗнӗ трактор, комбайнсем тата ытти ялхуҫалӑх машинисем илнӗ.

Республикӑри машина-трактор станцийӗсем, колхоз стройӗн материаллӑ-техникӑлла хӑватлӑ никӗсӗ тата ялхуҫалӑх производствинчи ӗҫе татса паракан вӑй пулса, ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсен 80 процентне ытла, республикӑн кӑнтӑрти облаҫӗсенче вара—пӗтӗм ялхуҫалӑх ӗҫӗсенчен 90—95 процентне туса пыраҫҫӗ.

Колхоз производствине электрификацилесси анлӑнрах саралса пырать. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра Украина ССР-ӗнчи ялсенче 4.000 электростанци юсанӑ тата ҫӗнӗрен туса лартнӑ, ҫав электростанцисен хӑвачӗ, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, 9 хут ытларах пулать. Республикӑра мӗнпур колхозсенчен тӑваттӑмӗш пайне электрификациленӗ. Колхозниксем хӑйсен килӗсенче те электроэнергипе анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Ҫаксем пурте колхозлӑ ялӑн культурине малалла ӳстерсе пыма пулӑшаҫҫӗ.

Ялхуҫалӑхне анлӑн механизацилесе тата электрификацилесе пыни, хамӑр ҫӗршыври агрономи наукин ҫитӗнӗвӗсене колхоз производствине кӗртсе пыни, колхоз хресченӗсем вӑя шеллемесӗр ӗҫлени социализмла ҫӗрӗҫӗн культурине чылай ӳстерме, кӑҫалхи ҫул ялхуҫалӑх ӗҫӗсене, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, йӗркеллӗрех ирттерме, тырпула хӑвӑрт тата тӑккаламасӑр пухса кӗртме, кӗрхи тырӑсене агротехника кӑтартса панӑ чи лайӑх срокра акса хӑварма май пачӗ. Украинӑри колхозсемпе совхозсем государствӑна тыра памалли плана срокчен тултарчӗҫ. Иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, государствӑна кӗрпе тата ҫу тумалли культурӑсем, пахча ҫимӗҫсем тата ҫӗрулми нумайрах панӑ. Сахӑр кӑшманне кӑларса пӗтернӗ тата заводсене турттарса панӑ. Суркунне акма вӑрлӑх хатӗрлесе хунӑ тата кӗрхи ҫӗртме тумалли плана пӗтӗмпе пекех тултарнӑ.

Пирӗн республикӑри колхозсемпе совхозсем кӗске вӑхӑтрах выльӑх-чӗрлӗх йышне чылай ӳстерчӗҫ. 1945 ҫултан пуҫласа 1953 ҫула ҫитиччен вӑхӑтра Украина ССР-ӗнче мӑйракаллӑ шултра выльӑхсен йышӗ 4,7 миллион пуҫ хушӑннӑ, сурӑхсемпе качакасен йышӗ—5,6 миллион пуҫа яхӑн, сыснасен йышӗ—7,2 миллион пуҫа яхӑн хушӑннӑ.

Украинӑри колхозлӑ ялти чаплӑ ҫынсен—Елена Хопта, Марк Озерный, Прасковья Ангелина, Агриппина Пармузина, Мария Савченко, Александр Гиталов, Степанида Виштак, Евгения Долынюк, Фекла Швытко, Мария Фастова, Марта Худолий тата ытти нумай юлташсен опычӗ тӑрӑх колхоз производствинче малта пыракан пиншер ҫӗнӗ ҫынсем вӗренсе ӳссе пыраҫҫӗ, вӗсем кашни гектартан 35—40 центнер тулӑ, 80—90 центнер кукуруза, 500—600 центнер ҫӗрулми, 700—800 центнер сахӑр кӑшманӗ туса илеҫҫӗ. Чи лайӑх доярккӑсем хӑйсем пӑхакан кашни ӗнерен 5—6-шар пин литр тата ытларах та сӗт суса илеҫҫӗ. Паллӑ свинаркӑсем кашни сысна аминчен 20—25-шер ҫура илсе ӳстереҫҫӗ.

Ялхуҫалӑх производствинче малта пыракансен опычӗ социализмла ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫҫыннисем хушшинче ҫулленҫул ытларах саралать, ҫакӑ ялхуҫалӑхӗнчи новаторсен патриотла юхӑмӗн паха енӗ пулса тӑрать. Республикӑра уйрӑм ҫынсен рекорчӗсенчен пуҫласа массӑллӑ ҫитӗнӳсем, коллективлӑ ҫитӗнӳсем тӑвакан ялхуҫалӑх артелӗсен шучӗ ӳссе пырать.

Украинӑри ялхуҫалӑхӗнчи малта пыракансене 59 пин ҫынна яхӑн правительство наградӑсем панӑ, колхоз производствинчи новаторсем 1.057 ҫын Социализмла Ӗҫ Геройӗн хисеплӗ ятне илме тивӗҫлӗ пулнӑ.

* * *

Социализмла экономика хӑвӑрт ӳссе пынӑ май совет ҫыннисен пурнӑҫӗ пӗрмаях лайӑхланса, культурӑлӑ шайӗ пӗрмаях ӳссе пырать. Ку вӑл—социализмла общество аталанса пынин результачӗ.—халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшасси Коммунистсен партийӗпе Совет правительствин пӗтӗм политикинче тата куллехи ӗҫӗнче чи аслӑ закон пулса тӑрать.

1953 ҫулта апат-ҫимӗҫ тата промышленность таварӗсене ваккӑн сутмалли хакӗсене ултӑмӗш хут йӳнетни, ялхуҫалӑх налогне чакарни, ССР Союзӗн наципа... тупӑшӗ пӗрмаях ӳссе пыни Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшнине уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ. Совет Союзӗн государство бюджечӗ те, союзлӑ республикӑсен бюджечӗсем те халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшнине палӑртса тӑраҫҫӗ. Украина ССР-ӗн государство бюджечӗ 1940 ҫулхипе танлаштарсан икӗ хут ытла ӳснӗ, кӑҫал вӑл 17,9 миллиард тенкӗ шутланать. Бюджетри укҫа-тенкӗн виҫӗ пайӗнчен икӗ пайӗ ытла халӑхӑн культурӑпа пӗлӳ ыйтӑвӗсене тивӗстерме каять. 1945 ҫулхипе танлаштарсан, халӑха вӗрентес ӗҫе каякан расходсем 2,5 хут, халӑх сывлӑхне сыхлама каякан расходсем — 2,6 хут, социальнӑй обеспечени валли каякан расходсем—виҫӗ хута яхӑн ӳснӗ. Кӑҫал пурӑнмалли ҫуртсемпе коммунальнӑй предприятисем тума, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 24 процент ытларах укҫа-тенкӗ уйӑрса панӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра Украинӑри хуласемпе рабочисен поселокӗсенче пурӑнмалли ҫуртсем 10 миллион тӑваткал метр чухлӗ юсанӑ тата ҫӗнӗрен тунӑ, ялсенче 300 пин ытла ҫурт лартнӑ. Киев хулинче коммунальнӑй хуҫалӑхпа социально-культурӑлла учрежденисене пӗтӗмпех юсаса ҫитернӗ. Халӗ ӗнтӗ Киев хули вӑрҫӑчченхи вӑхӑтринчен лайӑхрах пулса тӑчӗ. Пилӗк ҫул каялла Дашава-Киев газопроводне тунӑ, Киеври 75,5 пин хваттере, 700 ытла предприятисене газ кӗртнӗ, ҫакна тунипе 2,5 миллион тонна топливо перекетлесе хӑварнӑ.

Тавар ҫаврӑнӑшӗ, халӑх валли кирлӗ таварсем туса кӑларасси ҫултан-ҫул ӳссе пырать, ҫакӑ та ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ пӗрмаях лайӑхланнине кӑтартса пырать. Украинӑри ырӑнти промышленность предприятийӗсем куллен кирлӗ япаласем 1950 ҫулхинчен 70 процент нумайрах туса кӑлараҫҫӗ. 1950 ҫулхипе танлаштарсан, халӑха аш-какай сутасси 53 процент, ҫу сутасси—34 процент, сахӑр сутасси—28 процент, пурҫӑн пир-авӑр сутасси—56 процент, атӑ-пушмак сутасси—31 процент, тумтир сутасси—30 процент, строительство материалӗсем сутасси—50 процент ӳснӗ.

Анчах ҫӑмӑл промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗ аталанни,—ун ҫинчен Г. М. Маленков юлташ ССР Союзӗн Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗнче каланӑ сӑмахра асӑннӑччӗ, — халӑха апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсем парса тӑма ҫителӗклӗ мар-ха. Ялхуҫалӑхӗ продуктсем туса хатӗрлени ялхуҫалӑхӗн индустриллетехникӑлла никӗсӗн шайӗнчен нумай кая юлнӑ, вӑл колхоз стройӗ туса панӑ майсемпе пӗтӗмпех усӑ курайман-ха.

Пирӗн республика ялхуҫалӑхне хӑвӑрт вӑйлатса яма питӗ пысӑк ӗҫсем тумалла. Украинӑри Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн октябрьти пленумӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, Украинӑра, 1952 ҫулхипе танлаштарсан, сӗт тата аш-какай 1,5—2 хут нумайрах пуҫмалла, ҫӗрулми икӗ хут ытларах, пахча ҫимӗҫсем—2,5 хут, вир, хуратул—2 хут, кукуруза—1,5 хут ытларах пухса кӗртмелле тӑвас пулать.

Пӗтӗм государствӑшӑн кирлӗ ҫав задачӑна пурнӑҫласси пӗтӗм халӑх ӗҫӗ пулса тӑчӗ. КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн историллӗ решенийӗсене пурнӑҫлассишӗн кӗрешме колхозниксемпе колхозницӑсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисем, наука работникӗсемпе хуласенчи ӗҫҫыннисем хутшӑнчӗҫ. Вӗсем пысӑк ҫӗкленӳпе ӗҫлеҫҫӗ, ҫакӑ партипе правительство ялхуҫалӑхӗ умне кӑларса тӑратнӑ питӗ пысӑк задачӑна анӑҫлӑ пурнӑҫлама—2—3 ҫул хушшинчех халӑх валли апат-ҫимӗҫ тата ҫӑмӑл промышленноҫпа апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ валли чӗртавар питӗ нумай туса хатӗрлеме май парӗ.

Украина ССР-ӗнчи парти, совет тата ялхуҫалӑх органӗсем, КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенине пурнӑҫласа, ҫитес ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене тума, чи малтан, ҫитес ҫуракине ирттерме хатӗрленме тытӑнчӗҫ. Промышленноҫлӑ хуласем сывӑхӗнче пахча ҫимӗҫсем ытларах лартса тума, юханшывсем сывӑхӗнчи айлӑмсенче ҫӗрулми тата пахча ҫимӗҫсем нумай лартса тума кирлӗ ӗҫсене пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Парниксемпе теплица хуҫалӑхӗ чылай саралать. Ялхуҫалӑх культурисене лайӑх пахса ӳстересси ҫине уйрӑмах хытӑ ҫаврӑнса пӑхаҫҫӗ. Кукурузӑпа ҫӗрулмине пур ҫӗрте те тӑваткал тӗмӗн лартаҫҫӗ. Ҫапла вара кукурузӑпа ҫӗрулми речӗ-ен хушшине кӑпкалатса тӑрас ӗҫе механизацилеме май пулать. Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ кая юлнине пӗтерме, унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерме нумай ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Украинӑри Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн октябрьти пленумӗ ялхуҫалӑхне ертсе пырас ӗҫе тӗпренех лайӑхлатма, республикӑри колхозсемпе МТС-сене квалификациллӗ кадрсемпе ҫирӗплетме мӗн тумаллине татӑклӑн палӑртса хучӗ. Кӑҫалхи ҫулах хуласенчен МТС-сене инженер-механиксем 3.800 ҫын, ҫавӑн пекех тата колхозсенче ялан ӗҫлеме агрономсемпе зоотехниксем тата ытти специалистсем 26 пин ҫын яма палӑртнӑ.

* * *

Социализм строй совет наукине, литературӑпа искусствӑна аталантарма анлӑ ҫул уҫса пачӗ. Украина халӑхӗн те, ССР Союзӗнчи ытти социализмла нацисен пекех, форми тӗлӗшӗнчен нацилле, содержанийӗ тӗлӗшӗнчен социализмла культури ӳссе чечекленчӗ.

Советлӑ Украинӑра шкул ҫулне ҫитнӗ ачасене пурне те ҫичӗ ҫул вӗрентессине анӑҫлӑ пурнӑҫланӑ, ҫавӑн пекех ачасене вӑтам шкулсенче вунӑ ҫул вӗрентесси саралса пырать.

Нацилле кадрсем ӳссе ҫитӗнни Совет влаҫӗ пулнӑранпа культура строительствинче тунӑ пысӑк ҫитӗнӳ пулса тӑрать. Украина ССР Наука академийӗ, наукӑпа тӗпчев институчӗсем, институтсенчи научнӑй работниксен коллективӗсем совет наукине ҫӗнӗ открытисемпе тата изобретенисемпе пуянлатрӗҫ, вӗсем социализмла производствӑн пур отраслӗсене те малалла аталантарма пулӑшса тӑраҫҫӗ. Пирӗн писательсем, художниксем тата скульпторсем хӑйсен произведенийӗсен идейӑлла тата художествӑлла шайне ӳстереҫҫӗ, ӗҫҫыннисене, коммунизмла воспитани парас ӗҫе активлӑ хутшӑнаҫҫӗ.

Украинӑн хӗвеланӑҫ облаҫӗсенчи ӗҫҫыннисем те совет халӑхӗсен тӑванла ҫемйине кӗрсе хӑйсен телейне тупрӗҫ. Кунта, Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, ССР Союзӗнчи халӑхсем пурте тӑванла пулӑшнипе, социализмла ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвас тӗлӗшпе кӗске вӑхӑтрах пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Хӗвеланӑҫ енчи облаҫсенче йывӑр промышленноҫа аталантарас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса пыраҫҫӗ. Унти хресченсем Советлӑ Украинӑпа пӗрлешиччен капитализмӑн калама ҫук тискер пусмӑрне тӳссе пурӑннӑ. Халӗ вӗсем колхозсене ӗмӗрлӗхех ҫирӗплетсе панӑ ҫӗр ҫинче хаваслӑнса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫамрӑк колхозсене Совет государстви ялхуҫалӑх машинисем парса пулӑшать, обществӑлла хуҫалӑха аталантарса пыма, ҫапла вара колхоз хресченӗсене пуян та культурӑлла пурӑнма мӗн кирлине пӗтӗмпех туса пама тӑрӑшать.

* * *

Украина халӑхӗ политика, экономика тата культура енӗпе тунӑ мӗнпур ҫитӗнӳсене Коммунистсен партийӗ аслӑ ертсе пынипе, аслӑ вырӑс халӑхӗ тата Советлӑ Тӑван ҫӗршыври мӗнпур халӑхсем ырӑ кӑмӑлпа пулӑшса пынипе тунӑ.

Советлӑ Украина историри паллӑ куна—Украина Российӑпа пӗрлешнӗренпе 300 ҫул ҫитнине паллӑ тума хатӗрленет. Украина Российӑпа пӗрлешни украина халӑхӗн нумай ӗмӗрсем хушши пынӑ кӗрешӗвӗ вӗҫленни пулнӑ, ҫав вӑхӑтрах украина халӑхӗ тӑван вырӑс халӑхӗпе пӗрлешессишӗн кӗрешнӗ. Ӑна вӑл яланах хӑйне шанчӑклӑн хӳтӗлекен тата тус тесе шутланӑ. Питӗ паллӑ государство деятелӗ тата полководец Богдан Хмельницкий ертсе пынипе пухӑннӑ Переяславльти Рада йышӑннӑ историллӗ решени украина халӑхӗ хӑйӗн шухӑш-кӑмӑлне—аслӑ вырӑс халӑхӗпе пӗр ҫемьере пурӑнма тӑрӑшнине палӑртнӑ. Ҫакӑ украина халӑхӗн историйӗнчи пысӑк улшӑну тапхӑрӗ пулнӑ. Украина халӑхӗ хӑйӗн пурнӑҫне вырӑс халӑхӗн пурнӑҫӗпе ҫыхӑнтарнӑ, ҫапла вара хӑйне, хӑй наци пулса пурӑнассине ҫӑлса тата сыхласа хӑварнӑ.

Икӗ аслӑ славян халӑхӗсем пӗрлешни, царизм, вырӑс тата украина феодалӗсемпе буржуазийӗ реакцилле политика тытса пынӑ пулин те, Российӑпа Украина халӑхӗсен туслӑхне ҫирӗплетнӗ, вӗсем шалти тата тулашри тӑшмансене хирӗҫ пӗрле кӗрешме пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул суйласа илнӗ.

Украина халӑхӗ авалхи вырӑс халӑхӗн пӗр тымарӗнчен пуҫланса кайнӑ. Пӗр йӑхран тухнӑ май, историре аталану ҫывӑх тата пӗрле пулса пынӑ май Украина халӑхӗ яланах вырӑс халӑхӗпе ҫывӑх пулнӑ. Ҫак тӑванла туслӑх Октябрьти Социализмла Аслӑ революци ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешнӗ чухне, шалти контрреволюципе ют ҫӗршывсен вӑрҫӑлла интервенцине хирӗҫ пулнӑ граждан вӑрҫинче, ҫӗршыва индустриализацилессишӗн тата ялхуҫалӑхне коллективизацилессишӗн кӗрешнӗ чухне, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пулнӑ Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑри паттӑр ҫапӑҫусенче ҫирӗпленсе, тӗреклене пынӑ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи мирлӗ строительство ҫулӗсенче халӑхсен туслӑхӗ тата ытларах ҫирӗпленчӗ Пирӗн халӑхӑн усал тӑшманӗсем — империалистсем тата вӗсен агенчӗсем — Украинӑри буржуалла националистсем халӑхсене хирӗҫтересе ярас тесе тем тӗрлӗ тӑрӑшсан та, вӗсем украина халӑхне пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул ҫинчен—аслӑ вырӑс халӑхӗпе тата Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсемпе туслӑ пурӑнмалли ҫул ҫинчен пӑрса ярайман.

Украина халӑхӗ ССР Союзӗнчи мӗнпур халӑхсемпе пӗрле Украина Российӑпа пӗрлешнине анлӑн паллӑ тума хатӗрленет. Вӑл кулленхи ӗҫпе социализмла Тӑван ҫӗршыва тата коммунизм патне ҫитмелли ҫулпа шанчӑклӑн ертсе пыракан Коммунистсен партине чунтан-чӗререн юратнине, ӗненсе тӑнине кӑтартса парать.

Пирӗн социализмла Тӑван ҫӗршыв — аслӑ Совет Союзӗ хӑватлӑн аталанса пырать, тӗнчери халӑхсем хушшинчи туслӑхӑн шанчӑклӑ тӗрекӗ пулса тӑрать. Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ, унӑн Центральнӑй Комитечӗ тата Совет правительстви аслӑн ертсе пыни совет халӑхне ССР Союзӗнчи коммунизм строительствин аслӑ та чаплӑ программине пурнӑҫлама май парать.

Советлӑ Украинӑри ӗҫҫыннисем, ССР Союзӗнчи мӗнпур халӑхсемпе пӗрле, Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе, хамӑрӑн аслӑ Тӑван ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне ӳстерессишӗн, тӗнчери мире ҫирӗплетессишӗн, коммунизмла общество туса ҫитерессишӗн малашне те вӑй шеллемесӗр кӗрешӗҫ.

## Колхозниксене пурлӑх енӗпе ытларах интереслентерме тӑрӑшмалла

ЧКАЛОВСКИ. КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ колхозниксене пурлӑх тӗлӗшпе хавхалантарас принципа чылай ҫӗрте пӑснина палӑртрӗ. Пленум йышӑннӑ тӑрӑх малашне колхозсенче ҫакӑн пек йӗрке пулмалла: колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ йышӑннипе выльӑх тата выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем сутнипе пухӑнакан укҫа-тенкӗрен колхозниксене аванс шучӗпе 25 процента яхӑн валеҫсе памалла. Аванс укҫине кашни кварталта обществӑлла хуҫалӑхра ӗҫлесе иртнӗ кварталта тунӑ ӗҫкунӗсем тӑрӑх 15 процент таран, кунсӑр пуҫне тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫре тунӑ мӗнпур ӗҫкунӗсем тӑрӑх 10 процент таран памалла.

Анланмалла ӗнтӗ, кӑҫалхи виҫҫӗмӗш квартал вӗҫленнӗ хыҫҫӑн мӗнпур колхозсенче колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗсенче сӳтсе явса, выльӑх тата выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем сутса илнӗ укҫа-тенкӗрен колхозниксене аванс шучӗпе валеҫсе памалла пулнӑ.

Анчах та ку тӗлӗшпе районти колхозсенче начар та васкамаҫҫӗ. Выльӑх тата выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем сутнипе илнӗ тупӑшран паянхи куна районти пӗр колхозра та колхозниксене аванс шучӗпе укҫа пама пуҫӑнман, ку ыйтӑва халлӗхе пӗр колхозра та колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗсенче пӑхса тухман.

Виҫҫӗмӗш квартал вӗҫленни икӗ уйӑх иртрӗ, тӑваттӑмӗш квартал вӗҫленесси те инҫе юлмарӗ Анчах та МТС директорӗ выльӑх тата выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем сутнипе пухӑннӑ укҫаран колхозниксене аванс шучӗпе валеҫсе памалли ҫинчен районти колхозсене нимӗнле кӑтарту та паман, ҫак ответлӑ тата колхозниксене пурлӑх енӗпе интереслентерекен ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырасса шаннӑ.

Калас пулать, районти нумай колхозсенче виҫҫӗмӗш кварталта выльӑх тата выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем сутса нумай тупӑш курнӑ. Сӑмахран, Сталин ячӗпе тӑракан колхозра 82.732 тенкӗ, «Восток» колхозра—66.947 тенкӗ, Мичурин ячӗпе тӑракан колхозра—51.624 тенкӗ, Калинин ячӗпе тӑракан колхозра—53.247 тенкӗ тупӑш илнӗ. Ҫавӑн пек колхозсем районта нумай. Апла пулин те халлӗхе районти пӗр колхоз та ҫак тупӑшӑн 25 процентне колхоз членӗсене аванс шучӗпе парас тӗлӗшпе Госбанк уйрӑмӗнче уйрӑм текущи счет ҫине хывса пыман. Колхозсем валли уйрӑм текущи счет уҫмашшӑн Госбанк уйрӑмӗ те айӑплӑ.

Ҫапла вара, районти колхозсенче КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ колхозниксене пурлӑх енӗпе ытларах интереслентерессишӗн тӑрӑшма хушнине пурнӑҫламаҫҫӗ. Паллах, ҫакӑ вӑл обществӑлла хуҫалӑха малалла аталантарас ӗҫре пысӑк чӑрмав кӳрет.

Колхозниксене пурлӑх енӗпе ытларах интереслентерес ӗҫри ҫитменлӗхсене халех пӗтермелле. Ку тӗлӗшпе район Совет исполкомӗн тата МТС директорӗн колхозсене тивӗҫлӗ кӑтартусем парса пулӑшмалла.

И. МЕШКОВ.

## Пайщиксен пухӑвӗ

МУРКАШ. Ҫак кунсенче Кашмаш ялӗнчи пайщиксен пухӑвӗ пулчӗ. Унта СССР Министрӗсен Совечӗпе КПСС Центральнӑй Комитечӗ «Советла суту-илӗве малалла аталантарса пымалли мерӑсем ҫинчен» йышӑннӑ постановлени ҫинчен лекци итлерӗҫ. Ун хыҫҫӑн Шурча ялповӗн ӗҫӗсем ҫинчен ялпо правленийӗн председателӗ А. Ильин юлташ отчетлӑ доклад туса пачӗ.

Ялпо виҫӗ кварталти тавар ҫаврӑнӑш планне 106,5 процент тултарнӑ. Магазинсемпе лавккасен ӗҫӗ лайӑхланса пырать. Иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, кӑҫал ҫӑнӑх, кӗрпепе макарон 11 хут, кондитерски изделисем 5 хут, пир-авӑр 40 пин тенкӗлӗх ытларах сутнӑ. Сехетсем 5 пин тенкӗлӗх велосипедсем 19 пин тенкӗлӗх сутнӑ.

Пайщиксем ялпо ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине палӑртрӗҫ. Магазинсемпе лавккасенче таварсен ассортименчӗ ҫителӗксӗр. Краҫҫын, кантӑк, мӑлатук, пӑта, пачкӑ, тумтир час-часах пулмаҫҫӗ Суту-илӳ работникӗсем халӑха мӗнле таварсем кирлине шута илмеҫҫӗ. Иртнӗ ҫулта ялпора калушсем ытлашшипех пулнӑ, кӑҫал вара вӗсем ҫук. Кӳршӗри Шупашкар районӗнче кантӑк ҫителӗклӗ сутаҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах Муркаш районӗнчи магазинсемпе лавккасенче кантӑк пачах ҫук. Хӑшпӗр чухне таварсем магазинсене ҫитмесҫӗ, вӗсене ҫул ҫинчех сутса пӗтереҫҫӗ. М. Соловьев пайщик ҫакӑн пек тӗслӗх илсе кӑтартрӗ:

— Ноябрь уйӑхӗнче ялпона килнӗ пустава халӑха кӑтартмарӗҫ, спекулянтсем пустава тӑла туса сутса услам илчӗҫ.

— Нумаях пулмасть кӳрсе килнӗ 4 ҫӗвӗ машинине ялпо работникӗсем хӑйсем илнӗ,— терӗ Б. Демьянов юлташ

— Пай укҫи 200 тенкӗ тӳлемелле. Эпӗ ӗнтӗ 206 тенкӗ тӳлерӗм, анчах кашни япала илмессеренех манран продавецсем татах пай укҫи илеҫҫӗ,— тарӑхать Шукин пайщик.

Тухса калакансем ҫакна палӑртрӗҫ: пахарах таварсене хӑшпӗр продавецсем пытарса усраҫҫӗ, ярлыксене татса илеҫҫӗ те хакӗсене хӑпартса сутаҫҫӗ. Кашмашри лавккара крыжовник сырлинчен тунӑ эрех хакне 1 тенкӗ те 50-пус хӑпартса сутнӑ. Тарасасемпе тараса пуканӗсене илеме сапман. Таварсене хутпа чӗркесе памаҫҫӗ. Лавкка комиссийӗсем саланса кайнӑ.

Ялпо правленийӗ продавецсене ӗҫлеме лайӑх условисем туса памасть. Кӑмакасем ҫук пирки хӗл кунӗсенче лавккасенче чӑтма ҫук сивӗ Таварсене магазинсемпе лавккасене ҫитерсе парассине тӗрӗс йӗркелеменнине пула, продавецсем ӗҫе пӑрахсах таварсем илме ҫӳреҫҫӗ. Ҫапла вара хӑшпӗр чухне лавккасем хупӑ тӑраҫҫӗ.

Ялпо правленийӗ суту-илӳ работникӗсем хушшинче социализмла ӑмӑрту тата малта пыракансен ӗҫ опытне сарса пымасть, потребительсен кооперацине ҫӗнӗрен членсем илессине, пай укҫи пухассине вӑйлатмасть

Пайщиксем ялти халӑха тата колхозсене кирлӗ таварсем сутас ӗҫе анлӑн сарса ярас тӗлӗшпе нумай паха сӗнӳсем пачӗҫ Кун пек пухусем Шурча ялпоне кӗрекен Очӑкасси, Ятман, Ҫатракасси ялӗсенче те пулса иртрӗҫ

Г. СЕМЕНОВ.

## ДОСААФ организацийӗн конференцийӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта хулари ДОСААФ организацийӗн конференцийӗ пулса иртрӗ. Конференцире хулари ДОСААФ оргкомитечӗн председателӗ Корсков юлташ комитет ӗҫӗсем ҫинчен доклад туса пачӗ

Хулари ДОСААФ организацийӗсем ӗҫҫыннисем хушшинче ҫар пӗлӗвӗсене сарас, ҫар техникине вӗрентме массӑсене хутшӑнтарас, ДОСААФ членӗсен ретне ӳстерес тӗлӗшпе хӑшпӗр ӳсӗмсем тунӑ. Ку енӗпе уйрӑмах электроаппаратура заводӗнчи, Чӑваш педагогика институтӗнчи, энерготехникумри организацисем пуҫаруллӑ ӗҫленӗ. Унта кружоксем йӗркеленӗ, занятисем ирттерме нагляднӑй пособисем чылай туяннӑ. Ҫак организацисенче тӗл перекенсен ӑмӑртӑвӗсене тӑтӑшах ирттернӗ. Ҫар ыйтӑвӗсем тӑрӑх лекцисемпе докладсем тата калаҫусем тӑтӑшах пулнӑ.

Анчах хулари хӑшпӗр организацисен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Нумай ҫӗрте ҫар ӗҫне пропагандӑлас, тӗл перекенсемпе парашютистсем, моделистсемпе планеристсем, ПВХО значкисенчӗсем тата ытти специалистсем вӗрентсе хатӗрлессине начар йӗркеленӗ. Ирӗклӗ обществӑна ҫӗнӗ членсем илесси тата член укҫи пухасси те хӑшпӗр ҫӗрте тивӗҫлипе пулса пымасть. Пир-авӑр комбинатӗнчи, Чӑваш АССР Ялхуҫалӑх министерствинчи организацисенче массӑлла ӗҫе пачах йӗркелемен.

Ҫар пӗлӗвӗсене сарас тӗлӗшпе хулари ДОСААФ оргкомитечӗ те тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнман. Ҫакӑншӑн чылай делегатсем оргкомитет руководителӗсене хытӑ критикӗлерӗҫ.

— Пирӗн заводра ДОСААФ членӗсен ушкӑнӗ пысӑк.—терӗ электроаппаратура заводӗнчи ДОСААФ организацийӗн председателӗ Ильин юлташ.—Чылай ҫамрӑксем ҫар ӗҫне вӗренмелли кружоксенче тӑраҫҫӗ. Вӗсен пуҫарулӑхӗ пысӑк. Анчах занятисем ирттерме брошюрӑсемпе листовкӑсем тата нагляднӑй пособисем ҫителӗксӗр. Хулара тӗл перекенсен кружокӗсем чылай. Анчах пӗртен-пӗр тир ҫителӗклӗ мар.

Михайлов юлташ кооператив техникумӗнчи ирӗклӗ общество членӗсем ҫар ӗҫне тимлӗн вӗренни ҫинчен каласа пачӗ. Унти общество членӗсем пурте тӗрлӗ кружоксенче тӑраҫҫӗ. Техникумра докладсемпе калаҫусем ирттереҫҫӗ.

Афанасьев юлташ хулара инструктор-общественниксем вӗрентсе хатӗрлесси начар пулса пынине палӑртрӗ, ҫакӑншӑн ДОСААФ оргкомитетне критикӗлерӗ. Хулари радиоклубпа аэроклуб хӑйсен ӗҫне кирлӗ пек туса пымаҫҫӗ Ҫав клубсенчи инструкторсем кружоксенче ирттерекен занятисене ҫӳремеҫҫӗ. Буровцев юлташ тир-сӑран комбинатӗнчи парторганизаци ирӗклӗ общество организацийӗн ӗҫӗпе пачах интересленменни ҫинчен каларӗ. Баляев юлташ (пединститут) институтри наука работникӗсемпе преподавательсем ирӗклӗ общество ӗҫне сахал хутшӑннине палӑртрӗ. Кунта профессорсемпе преподавательсенчен ҫичӗ ҫын кӑна общество членӗнче тӑрать Пренире ҫавӑн пекех Лебедев, Шапошникова тата ытти юлташсем тухса каларӗҫ.

Конференци хулари ДОСААФ комитечӗн ҫӗнӗ составне, ревизи комиссийӗн членӗсене тата республикӑри ДОСААФ организацийӗн конференцине кайма делегатсем суйларӗ.

## Планран ирттерсе—продукци

ЕТӖРНЕ. Супа сыр завочӗн коллективӗ халӑх валли апат-ҫимӗҫ ытларах туса кӑларассишӗн тӑрӑшать. Завод продукци туса кӑлармалли ҫулталӑкри плана декабрӗн 1-мӗшӗ тӗлне 101,5 процент тултарнӑ. Планран иртерсе 32,5 центнер паха сыр туса кӑларнӑ. Мороженӑй туса кӑлармалли плана та иртерсе тултарнӑ.

Ӗҫре уйрӑммӑнах Архипова, Шепетова работницӑсем, Сӗнӗ Ядринӑри сепаратор пункчӗн заведующийӗ Матвеев, сӗт пухакансем Цыганова тата Ёлочков юлташсем паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Халӗ завод коллективӗ ҫулталӑк вӗҫлениччен ҫу туса кӑлармалли плана иртерсе тултарассишӗн кӗрешет.

Г. МЫТИКОВ.

# капкăн страници

## Председательпе пахча çимĕçсем

Пирĕн корреспондентсем хăшпĕр колхоз клубĕсенче пахча çимĕçсем усрани çинчен пĕлтерĕççĕ. Ку вăл кулăшла япала, анчах та факт.

ПРЕДСЕДАТЕЛЬ

**Председатель:** Тăхтăр-ха! Эсир мĕн кунта?

**Çĕрулми:** Мана хранилищо кирлĕ... шăпăсĕ вилетĕг.

**Куйăта:** Ман валли те виçта та выран çук-шим вара?

**Кашăр:** През юлташ, полвал кирлĕ!

**Кăшман:** Антрарăм. Бумбĕ çурĕрĕм, виçта та вырăн тупăмарăм!

**Председатель:** Пшоп-вон! Ан чăрмантарăр! Сире валли клуб пур вĕт! Савăнта кайăр... Сутă та кĕмест, кантăксене те хăмпа... Сире калаççĕ! Ахаль те ĕç ăйне пултăм...

П. МАТВЕЕВ.

Шупашкăр районĕ, Никаси.

## Юмахра мар, пурнăçра та пулать мĕн...

Иртнĕ çул «Победа» колхоз председателĕ Н. Григорьева счетовод Г. Иванов вылăхсен аванне перекетлес енĕпе «пысăк» ĕç тунă: фермăсем çывăхне вылăх апачĕ кĕртерĕççĕ пама. Çак питкех те «ăслă» практика таса ӳт варринче фермăсем валли ӳкерсе лартнă 50—60 лав суртки уламне «перекетлесе», çăварма май панă.

— Шăписене тислĕк тутарпиччен, хамăр вылăхсем айне сарса усă курас, вăлесçе парăр ĕçкуçĕ тăрăх çав уламе! — тенĕ колхозниксем, сурхи ăшă хĕвелене юр пĕрăме тапратсан.

— Обществăла вылăх валли ӳкăрнă апата колхозниксене салагса параçси çинчен хăй уставра калана?—кăшкăрса тăкна колхозниксене председательпе счетовод харăссăн. Çакăн хыççăн, палах, уламе çинчен урăх сăвăр усăкан пулман.

Су кунĕсем иртсе пынă. Сил-симĕс тумпа сывĕрсен тыра пусснине талăка юлна уламе ури хăйĕнчен хăй вăтанса кăпшăкех пусăрăнса пынă. Сисмесĕрех кĕрӳннехи сивĕсем те персе çитнĕ.

Колхозникçем каллех хирти «тислĕк тума» хăварнă уламе ури çинчен аса илеççĕ...

— Ха, мĕн хăтланаççĕ! — тет пĕр ирхине председатель, счетоводпа иккĕн правлени канцелярине кайнă чух, уламе йăтакан колхозниксене асăрхаса.—Чăрас пулать ку йĕркесĕрлĕхе!

— Ирĕн-ăна курпăн пулмалла, — тет счетовод кусĕсене чеен хĕссе.—Ман пуçра çанна курсан питех те паха шухăш çуралчĕ.

— Мĕне шухăш?

— Юмахри пек, вилĕ карчăкран чĕрĕ карчăк тăвасси çинчен... Калăпар, санăн уламе ури çĕрсе кайăк. Пĕр ирхине тухатăп та, ун вырăнне çĕнĕ уламе ури лаçа парать!

— Юмахра пулать вăл...

— Пусăпа ĕçлесен, пурнăçра та пулать. Халех уй-хир хурансене уламе йăтаканесен списокне тума хушас. Акă санна сĕрĕк уламе ури çинчен—çĕнĕ уламе ури!

— Вăт ку ило-ен!—кулса ярать председатель.

«Пĕвя» çăмăллăнах пурнăçа кĕрет. Колхоз пурăхне выранта сĕрсе пĕтсен те никамăн та тĕкĕнме юраманни çинчен председательпе вирлĕ сăмахне итлемĕ хыççăн, колхозниксен пухăнĕ çĕнĕ уламе йăтса илĕнь кĕнĕ çур ир халăхĕнчен пĕрĕр-шăпăр центнер çĕнĕ уламе тытса пама йышăннăть.

Икĕлемĕн тĕслĕк колхоз руководителĕсем кĕтмен çĕртен пысăк пухăсла пулна çĕрулăмпи пуçланать. Колхоз председательĕ хăй валли пилĕн стеналă пӳрт лартасси çинчен тăрăшса çу кунĕсенче çĕрулма уçрамалли полвалсене исбасси çинчен шутлама та пуçтарăннă. Колхоз руководителĕсем вара тĕрĕс ĕненни пĕлтĕççĕ: пур-ăнăçсене те пысăк ситерĕпе хыççăн «ытлашши» вăхăт 1 000 пăт çĕрулми шанăсĕ «органикăлла удобрени» тăвас, теççĕ. Хĕл тăвăнтан ăна çăвăрлăсем ăсăнтăр, çăварма ăсăтăр-и-ха, теççĕ кăшпăр колхозниксем.

П. ВАСКИН.

Чурачăк районĕнчи «Победа» колхоз.

## ÇЕНЕ ХАÇАТ

— Юлташ, мĕн эсир çĕнĕ стена хаçатĕ çине кусăра хĕссе пахатăр?

— Куçа сиет.

— Мăн?

— Критика.

В. УКА.



## КĔСКЕ КАЛАÇУ

— Юлташ, вулав сутне мĕншĕн усман-ши?

— Заведующи пушă мар.

— Аçта. Семинара кайнă-ши?

— Сут. Йĕтес сăри ĕçме.

Ручка ПЕТЕРЕ.

Комсомольски районĕ.

Канашри вагонсем ремонтлăн заводăнче çĕлăкки спорт сезонĕ ситсе тăвинне тухмасĕр. Спорт инвентарĕсене—конькисене, йăлтăрсене, хоккей паттакки ĕçе, ботинкăсеме костюмсене юсамаççĕ. Йĕлĕртесе 25 мăшăр çеç. Йăлтăр паттакисем, тăвиçем ӳт. Чылай йĕлĕртесене иртнĕ кĕрӳн ӳкĕрмĕ сывсене салатса пăчă та, халĕ те пухмаççĕ. «(Вагончик» хаçатран).

Мучи: Сана, эчам мĕн кирлĕ?
Ача: Катока ярăмма кĕрт-ха.
Мучи: Пирĕн кунта хĕлларăн спорт сезонĕ килес хĕлле тин пуçланать.

## Иван Волков ăнланмасть...

Есĕк-сикĕрен Йăван яланах сын сĕлăкĕпе тавăрнăть.

— Эсĕ ăнер тăхăнран манăн чăпар сĕлăкĕме тăхăнса кайнăн вĕт-ха?—шăтать унтан сăрапуçăн юлнă сын.

— Çапла, тăхăнса кайрăм, — пĕр пăрканмасăр ответлет Йăван.

— Апла пулсан, тавăрса парсамччĕ сĕлăкĕме.

— Мĕне сĕлăкĕме? Курман, пăтмĕн,— тĕлĕнет чухмăрах Йăван, чăпар сĕлăкĕ пуçĕ çине пусарах лартса.

— Каларăм-ске-ха,— тепĕр хут ăнлантарса пама пуçлать сĕлăк хуçи — Ĕнер хăнаран маи сĕлăкĕме тăхăнса кайрăн вĕт-ха?

— Çапла, тăхăнса кайрăм.

— Тавăрса пар сĕлăкĕме.

— Мĕне сĕлăкĕме? Курман, пăтмĕн,— каллех ик алла çапса пăрахать Йăван. Тăхăр хутчен аса илтерсен те. Йăван «ăнланмасть», «мĕне сĕлăк?» те «мĕнле сĕлăк?»—пăтать вăл.

Ку вăл мухмăр-сухмăрла пуянă калăçу тĕлĕнĕр. Иван Трофимович Волков—çак халăрри Йăван мар. Вăл çын сĕлăкне хапсăнмасть. Пачах урăхла.

Акă вăл, тăп-тăр урă 23 çухни çын ВЛКСМ Вăрнар райкомĕнче ларать. Пăтă парсан—мачча сине тинкерет те кусĕсене мăч-мăч хупкаласа илет. Хăйĕнне ăнлăн-шăр ларакан Валентина сине пĕрре мĕскĕнĕн, тепре каярран пăлса илеç.

— Эсир, Волков юлташ Валентинăпа пĕр-пĕрне юратса пĕрлешнĕ вĕт-ха?—пăтасçĕ унтан.

— Çапла, унпа эпир кăçалхи августа уйăхĕнче сыпăнăвçĕ,— хăйĕнне çăлса илет Волков Валентина сине.

— Халĕ вара арăмуна пĕрле пурăнма шутламастăр пулать?

— Мĕне «арăмуна»? Арăм сук манăн. Пурăнман эпир унпа. Пурăнмастăр та,— татса калать Волков. Вăл хăвăртах Валентинăран тепĕр енне сăвăнса ларать.— Кăштах пурăнпа тейĕшĕр... Мăнех-ха вара сыранни? Эпĕ халех хут уйăрттарма пуятаратăп.

— Мĕншĕн?—пăтасçĕ Волковран. Вăл часах ответ парайнасть, пусно алăлла чикет, лакка пăхса илет.

— Анне хирĕççех манăн. Аялантарасшăн мар мана,— тесе хурать.

— Ну, хамăн та камăн çук.

— Апла вара арăмуна, ывăр çын пулнăскерпе, пĕрле пурăнма шутламастăр курăнать?

— Мĕне «арăмуна»?.. — кăмăлсăр пуçпа пек суналланать Волков.

— Кайтăр вăл калала. Эпĕ ăна тытса тăмастăп.

Халĕ Волков тен, хăйĕн ятне те ăнлашмасть пулĕ. Темĕнле уçăлтарма тивет.

— Волков юлташ, эсир халĕ урăх хĕрарăмпа пуçăнатăр никеч Тĕрĕс-и?

— Тĕрĕс пулмасăр Пурăнатпăр-ха, хамăн тивĕçлипех.

— Арăл-арăмлăх?—хушăлă хучĕ тепри.

— Мĕнле арăм сиччен ыйтатăр таркăн?—ик алла шарт! çап-çа ответлет Волков. Унăн çăн-пичĕ çине пăхсан, «Эпĕ те эпĕ мар, ташлам та манăн мар» теккен самăхсем аса илеççĕ. «Мĕнле арăм?» та «Мĕнле арăм?» тесе хăласлатнать вăл. Пĕр кушăра салхуланнă пек те пулать, çав вăхăтрах тăйĕне хăй «ытлăрăнă» тытăлана пăхни те сисĕнет.

... Иван Волков кăçал нумай вырăнсенчо пулкаланнă. Суталăк пуçламăшĕнче, сăмахран. ăна Владимир облаçĕнче пулма тӳр килнĕ. Унта вăл сахал мар «пикем» куркаланă. Пĕрне варе, М. грамотăнăна, «ăмĕрлĕх юратса пăрахни» çинчен пĕтернĕ, ăна пĕр ывăрăн мăшăр вăйăк пек килĕштерсе пурăнма кирли çинчен калаçнă.

Вăхăт иртни сисĕнмен. Волковăн калала тавăрма тивнĕ. Вăл пĕре кĕрентермен. сӳнми юрату çинчен ăнентерсе хăварнă. Тавăрăнăть те кайăксĕр енне выранна каллех «ĕмĕрлĕх юрату» çинчен палкама, тытăнать, Валентинăна палласшать, тӳр та тăвать. Иртнĕ август уйăхăнче вĕсем иккĕш те ЗАГС-ра хут çине выляй пусаççĕ ..

Сентябрьте вара вăл... Хорисор Сарăмăс ялне, килĕ, тăван амăшĕ патне тавăрăнать. Халĕ каллех ĕнтĕ вăл «ĕмĕрлĕх юрату» шырама ĕмĕтленет Анчах... Владимир хулинчен хăйпи М граждански ушет. Ураx иртет-и иртмест-и — Валентина та килет. Мĕн тумалăа-ха? Волков Валентинăна киле кĕртсе те чăрманмасть «Мĕншĕн килес мана намăсланаратăр? Çапăн пек машăлă пăтăртăк хыççăн, санпа пурăнасси пулмă»—ӳкĕлемест ăна, хăвăртрах лаша кӳлсе, арăмне Вăрнар станцине десет.

Валентина билет илме ӳкçа пыраçран ыйтать. Комсомолка клетькинчен ВЛКСМ райкомне каннă-мăтма кĕрет. Райком Волков комсомолеца та чĕнет.

Çав вăхăтра итлĕрĕмĕр те эпир Иван Волковăн калаçăнне Калаçăва райком бюровĕн членĕсем активлă хутшăнчĕç. Вĕсем Волков комсомолеца пĕркене кĕртне кирли çинчен чылай калаçрĕç. Пичи Волков кăна хăй ысанаçси çинчен пĕр сăмах та тăмарамарĕ. Ютшăнкинчен вара райкомрисем ăна «наказани» пачĕç: «шухăшласа пăхма вăхăт парас», терĕç.

Çапла. ВЛКСМ райкомĕ хушшинче, Иван Волковăн нумай шухăшласа сӳреме тиветех. Кам пĕлет, мĕн çинчен шухăшланă вăл халь.. Тен, çĕнĕ «юрату» çинчен шутлать пулĕ?

Н. НИКИТИН.

## Вăттисен самахĕсем

Юлташу хăвăртан та хайăх пултăр. Куç хăрать те, ала тăвать. Ăс пымасан, ăслă çуг вырттă.

Чĕлхуне калаçма ан васка, ĕçне тума васка.

А. СОСНОВА çыреа илнĕ.

## „ЙЫВĂР ЧИР"

— Манăн паян каллех статья тухнă. Вуларăн-и?

— Сурчине вуларăм

— Мĕнлеш сурчине кăна?

— Мĕншĕнни-чĕнни сурчине эсĕ цитатăпа тултарнă. Вĕсене эпĕ Сизор Петровичăн Указаврах статьинчех вулаканччĕ...

— Эсĕ... эсĕ апла мана хисеплемеетĕн.

— Хисеплеси-мĕнни... эсĕ вара мана та. ытти вулакансене те хисеплемеетĕн. Ху шухăшна калас вырăнне цитата купи ҫыснe пытанатăн.

— Пытанмăттăм... анчах манăн цитатăсăр чăлхе сăмсланать.. Хал ситмест тесе каламатăп, цитатăпа авторитетлăрах, ӳргунди пурри те куранать. Çапла та пур: шанчăклă. Инкам та тапăнас çук...

— Апла пулсан. тухтăр патне каймасăрах палла: эсĕ. юлташăм, ывăр чирпе чирленĕ. Ана «цитата чирĕ» тесçĕ

П. ТУРАТ.

## *Тĕлĕнмелле мар, анчах...*

Комсомольски районĕнчи хăшпĕр яхăçлăх артелĕсенче уй таврашăсене уйрăм колхозниксен килĕсенче усрасçĕ.

Сула кайма пикенсен,
Ут тавраш̆ĕ суна сух.
Пĕр сехет пек сĕрсен,
Суни пур. сĕмен сух.

Сула кайма тытăнса
Сур кун иртрĕ тарăхса.

Тĕлĕнмелле мар. анчах,
Çапла калаттăр татсах:
— Вăхăт ĕнтĕ пăхăнма
Устав хушшă йĕркене

С. ШЕЛКИН.

## ЧАКАК

(Юлтару)

Шăлса çиниче чакăлтатса
Чакак ларать,
Чĕлхи чăрăкăрне манса,
Лупас çинчи Кулюкана
Çапла калать:
— Ах. Кулюкана. шеллен çапа!
Ялан ас пĕр-пĕччен!..
Чуну опле чăтăм ши сан?
Эс чĕпĕ каларма ларсан,
Кукчук килет те кашнине
Сав савăт ишăрпа
Илсе кăять сĕм вăрмана...
— Хуп сăвăрна!—тет Кулюкка
Элекçĕ Чакака—
Пире эс хирĕçтерес сук.
Питех сан сăмахĕ килсен,
Ман Кăвакарчăн хăль те йăвара:
Эп усăлмашăн тухнă чух,
Сăмартăмсем сивенсерен,
Ман вырăна вăл хăй пусма ларать.
— Чак-чак! Чăнах-и?! Тур
анчах!..
Вăт упăшка!—тет хай Чакак.
Вара. йăр-ар вĕçет те вăрмана,
Пуслать çĕпĕ хыпар сарма:
— Вăт пурнăç Кулюккан! Вăт шăн
ăна!
Аçи пуçлана чĕпĕ калармы!
Ман упăшкăн ун пек пуçсан,
Чĕкем те вилĕччĕç пулса!
Сымсем килĕштерсе пурăннине
Сан Чакак пек курăймасем
Сăйра тĕл пулаççĕç ку чухне,
Анчах та пур-ха, пур вĕсем!

А. КАЛКАН.

## Фотоӳкерчĕк айăплать

Ивановăри кирпĕч заводĕ вăрçă чĕнтĕкĕ пысăк пĕс хуранĕ кӳрсе кланĕ. Çак хурана халĕ те выльăхсăр лартман, ăна сумĕрпа юртан хӳтĕлеме сарай та тума. Пĕс хурапĕсем нумай предприятиесене организацилесе кирлĕ.

— Ухмăрти кивĕра кирлĕ пулать, ытти организацисене памастăр,— тесе ответлеççĕ завод руководителĕсеме Чăваш АССР Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленийĕнче ĕçлекенсем çак хурана пама мăтăканнисене.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: усăсăр выртакан хăлăй хуран.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

## Çĕрпӳри хĕл

Çĕрпӳ хулин асăлă урамĕнче уяврн пек. Çăнăл тумланнă кăчăна хĕр хавасăлăн утса пырасçĕ. Суа-йĕрĕн 243-мĕш номерлĕ участокĕнче ĕçлекен çамрăк рабочи Саша Шумалкин хăйĕн чун савнийĕнĕ— Валя Грачеванна ЗАГС-а илать. Телейлĕ самрăксем чĕрисем те сапăнăçăлăн тапăçсĕ. пилĕ вĕсем икĕлемĕй бюрăпех туслă машăр пулассинне законлă пĕркенне сыраяса сирĕплетеççĕ.

— Çинталăк хытах сивĕтрĕ, Саша,— тет хĕр.—эпĕ шăпăна пек пулатăм.

— Каштах чăт, кавакарчăлăм —Ашшăн калать кăчча.—Ака, часах ЗАГС-а çитетпĕр те. ларсах ăмăлăпăр.

Кăччăн пуçне чечекеллине илемлетнĕ таса пӳлĕм куранă пек, «ырă сунса кĕтетпĕр», «чунтан саламлатпăр» тесе вĕтĕе илнĕ пек туйăнать.

ЗАГС бюрĕнче вырнасăлă пӳрте вĕсем хумхансах кĕчĕç. Саламланине хирĕç ашшăн ответлеме хăтĕрленĕççĕ. Анчах пӳлĕпе самрăк ашшăрсен ушне кайнă карташна тухса тăчĕ.

Кунта урамринчен пучах та ăшă мар пăн. Тĕрлĕ савăч-сапа çинче ӳстернĕ чечекеллн пирвайăн савĕнех шăпăса пĕтнĕ. Пӳлĕме электричество сутти те кĕртнĕн.

Бюро заведующийĕ А. Матвеева юлташ, пулăм ăмăлтăк тăванăн. ăмсăр тутăр пĕркенийĕскер. сивĕ пăчăна ӳчĕ чĕрĕçленсе ларнă та, чăшлатса выртакан вутта чĕртĕç тесе. ахăлтăсе кĕрет. ăнчах чĕрĕ вутă пиеплле те çунасăпăн мар, йĕçĕ тĕлĕн çас пăсăрланать.

— Саша, часрах калсчĕ,—терĕ хĕр пĕчĕк алăисене вĕрсе ăшăтнă май. Вăл хурланнă пек пулчĕ.

— Часах кайăпăр, тунăм,—ăмăлапăрать кăчча, хăй пӳлĕм тавра салхуланă пăхса илет.—Эх, пĕртен-пĕр ЗАГС сурчне культурăллăй-тытма те культура çитмест-ши?

ЗАГС кĕнеки çине пăвнă чернилапа алă пусăлнă ылăсăн сăмрăк сăмсăн сăлăхлăн тухса кайрĕç.

Матвеева юлтаки йĕрĕн вăйăтăкăн пушаннă чухне, хăштах ăшăнас тесе, бюрĕн учреждениесене пайса ларать. Пĕрремпне вăл районти архив завеçующийĕ В. Гусева юлтаки патĕнче пуçчĕ. Вĕ районтиpe хăйсен учрежденийĕсенче мĕнле ĕçлесе хăй кăçасси çинчен сăмах тапратрĕç.

— ЗАГС суртĕнче чăтма пулĕ-ха,—терĕ Гусева юлташ.—Начар-и. хăйăх-и, сурт евĕрлĕ, тăрри те тур. мăрйинче тĕтĕм тухать Архив сурчне пырса курсенчĕ евĕр. Тăрра те сук. Кăмăла пур, анчах мăрьесĕр.

— Аçта кайса ăшăпатăн Вера Петровна,—кĕртенсе мăйтрĕ ЗАГС бюровĕн пуçăлăкĕ.

— Тăста та çитетĕп, Анна Константиновна.—ăмăлăрăм сăмларăр архив пуçлăкĕ —Пурнăçăн вăтăрах райисполкома. Райисполком председательĕ Степанов юлташ пăтне каятăн та. архив сурчне юсасси çинчен калаçма май ăшă кабинетра лайăхах ăшăнса çитетĕн. Унтан тухса кайсăн каллех шăнма тивет.

— Сана та пулăпăççĕ-ши вара? Ниман та сырса курмасть-ши?

— Архив сурчне иссма 7 пин тонна çунса уйăрасси çинчен решени ăшшăнлăçĕ,—терĕ Гусева юлташ.—Анчах вăл решени те пирвайăн ешĕлле шăнса ларчĕ.

— Шăнса ăна пăсланнăн вăрăм кăмăлпа, Вера Петровна.—вăмлăлларчĕ Матвеева юлташ.—Сĕрлĕрĕ пирĕн евĕрлисем татах та пур.

Пур çав Ун пек çынна çав кунпех тĕл пулма тӳрĕ килчĕ. Сĕрпӳра Горпов тимĕртăмăр тата хуçалăхра кирлĕ тавăрсен магазинĕ умĕнче хуçăм кӳрĕк, ăшă малахай тăхăннă тĕрлелă арçын алăпчи сăран алсатулăсене чиртсе çитсе. Ку вăл—магазин заведующийĕ Николай Семенович Журавлев юлташ.

Тухта 20 градуса яхăн сивĕ, тимĕртăмăр тухтăрăпа магазин ăшĕнче тата сивĕрех. Журавлев юлташăн, шăнса кӳтнĕ хыççăн. пĕрĕсĕрех ухмăн тухса ăшăнăлăрах, сирĕлрех. сивĕрех туса пырас пулăшу. кăсчен-сывран пулăшăнăçăсть.

— Тимĕр ăшĕнче пурăнатăн, ытăть тимĕр кăмака лартса парăсшăнччĕ —терĕ вăл, магазина кĕрсе. Заведующи, сивессĕн пăхса, горпо правленийĕн ялресĕне темĕн калаçăт, анчах ӳçĕн пăтĕмерĕ.

Райисполком председательĕ П. Степанов, райпотребсоюза горпо правленийĕсен председательĕсем А. Софоновпа Н. Корсков юлташсем пăтă райкомĕн пленумĕсенче тата тĕрлĕ канашлусенче: «Пирĕн тимĕр сынсемшĕн. работниксемшĕн тăрăшмалла. вĕсене вĕрлелĕ те тулăçлă ĕçлене лайăх условисем тусе памалла, тĕнне тăтăмах илтне пулать.

Çапăн пек ăнă сăмахсене пачăй хыççăн работниксен сивĕнне памăлăсем те ăшăнăç пек пулассĕ. Анчах ĕçлаçăрапăлĕ. Вера Петровна.—ăнланăрçăр ăнланăр. ЗАГС бюровĕпе архив сурчĕсене тата нумай магазинсемпе ларексене ăшталăнăр.

А. ОХОТНИКОВ, Н. ВОЛКОВ.

### ПЕЛТЕРУ

Капăнăçăсем мĕн пĕлсе тăмалла? Ярса пана материал конкретлă та çинĕч пулмалла!

Сатира чăлхи—саламат.
Сатирара пултăр—ăт, хушамат,
Фокт!

Ах
мĕн кирлĕ Капăнăш.
Çапла
вăтăротгĕр
сыраканна.

КАПКАН.

Страницăпа ӳкерчĕксем Г. Харламовăн.

# ООН Генеральнăй Ассамблейин VIII-мĕш сессийĕ

## Пĕрлехи лару

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). ООН Генеральнăй Ассамблейин ĕнер кăнтăрла пулнă пĕрлехи ларăвне Бразилипе Инди делегацийĕсен пĕрлехи резолюци проектне тăратнă. Вăл резолюци проектне Корея ыйтăвĕ тăрăх Политикăлла комитетăн ытларахăшĕ йышăннă. Ку проектра çапла сĕннĕ: Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн ĕçне чарма йышăнмалла, Генеральнăй Ассамблейăн председательне ООН «членĕсен ытларахăшĕ килĕшнĕ» хыççăн кăна Корея ыйтăвне пăхса тухма сесси ĕçне тепĕр хут пуçлама сĕнмелле.

Польша делегацийĕ резолюцин çак проекчĕ пирки тӳрлету сĕннĕ. Унта Генеральнăй Ассамблейăн председателĕ саккăрмĕш сессийĕн ĕçне ООН «членĕсен ытларахăшĕ килĕшнĕ» хыççăн кăна тепĕр хут пуçлама пултарни çинчен калакан сăмахсене резолюци проектĕнчен кăларса пăрахма сĕнӳ панă. Польша представителĕ М. Нашковский çакна кăтартса панă: Генеральнăй Ассамблея председателĕн правине хĕсекен çакăн пек услови Корея ыйтăвне сӳтсе явас шутпа сесси ĕçне тепĕр хут пуçлассине чăрмантарма пултарать. Ку услови Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парассипе интересленмен çынсене Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн ĕçне çак ыйтăва пăхса тухас шутпа тепĕр хут пуçлассине чăрмантарма май туса пама пултарать. Польша делегацийĕ панă тӳрлетĕве йышăнмасан, резолюци проектне сасăланă чухне Польша делегацийĕн нихăш майлă та сасăламасăр тăма тивет, тенĕ юлашкинчен М. Нашковский.

СССР представителĕ А. Я. Вышинский хăйĕн сăмахĕнче делегатсене çакăн çинчен аса илтернĕ: Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн ĕçне тепĕр вăхăта хăварасси çинчен тăракан ыйтăва Политикăлла комитетра сӳтсе явнă чухне хăшпĕр делегатсем Паньмыньчжоньри калаçусенче пысăк йывăрлăхсем пуррине кăтартса панă.

Китай Халăх Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Чжоу Энь-лай янă телеграмма та Паньмыньчжоньри калаçусенче питех те пысăк йывăрлăхсем пулса тăнине кăтартса парать, тенĕ А. Я. Вышинский. Чжоу Энь-лай телеграммине Ассамблейăри делегацисем хушшинче Генеральнăй Ассамблейăн официальнăй докуменчĕ вырăнне салатса панă. Вăл телеграммăра Чжоу Энь-лай Генеральнăй Ассамблейăна Корейăри лару-тăру хальхи вăхăтра чи йывăр пусăма çитни çинчен аса илтернĕ. Чжоу Энь-лай пĕлтернĕ тăрăх, тыткăнри çар çыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне Корейăпа Китай енĕ пурĕ те çичĕ кун хушши кăна туса пынă. Перемири çинчен тунă килĕшӳ тăрăх, ăнлантару ĕçне 90 кун хушши туса пымалла пулнă. Ăнлантарулла калаçусене пилĕкмĕш хут чарса лартма лекнĕренпе çирĕм кун иртнĕ ĕнтĕ, анчах ăнлантару ĕçне халĕ те тепĕр хут пуçласа' яман-ха. Çавна пула, Корейăри перемири çинчен тунă килĕшĕве, тыткăнри çар çыннисене репатриацилесси çинчен йышăннă килĕшĕве хытă пăснă ĕнтĕ. Чжоу Энь-лай çавăн пекех çакна кăтартса парать: политикăлла конференци пухас ыйтупа Паньмыньчжоньра иртттерекен канашлу та пысăк йывăрлăхсем умне тухса тăнă. Политикăлла конференци пухасси çинчен килĕшӳ тăвассине юриех тăсса пыраççĕ.

Хăшпĕр делегатсем Политикăлла комитетра, тенĕ малалла А. Я. Вышинский, çапла çирĕплетсе калаççĕ: Корея ыйтăвне хальхи вăхăтра Генеральнăй Ассамблейăра сӳтсе явни ĕçе пăсма кăна пултарать, сӳтсе явни лайăх результатсем памасть кăна мар, вăл Паньмыньчжоньри калаçусене пăсма та пултарать, терĕç. Совет делегацийĕ çакăн пек шухăшпа килĕшме пултараймасть, мĕншĕн тесен калаçусене ăнăçлăн вĕçлессишĕн чăннипех тăрăшсан, Генеральнăй Ассамблея, эпир çирĕппĕн шанса тăнă тăрăх Корейăра политикăлла конференци пухассипе çыхăннă ыйтусене ăнăçлăн татса пама е кансĕрлекен мĕнпур чăрмавсене пĕтерме пултарать. Çапла ĕнтĕ, Генеральнăй Ассамблея пĕтĕм Корея ыйтăвне ăнăçлăн татса парас ĕçре пулăшма пултарать.

СССР представителĕ малалла çапла каланă: тем тĕрлĕ чăрмавсене пăхмасăр, Корейăпа Китай енĕ Паньмыньчжоньри канашлусенче Корейăра политикăлла конференци пухассипе çыхăннă ыйтусем тăрăх килĕшӳ тăвас тесе пысăк вăй хурать. Анчах тепĕр енĕ пирки çакна калама май çук-ха. Тепĕр енĕ перемири çинчен тунă килĕшĕве час-часах пăсать. Перемири çинчен тунă килĕшӳ тăрăх, тыткăнри çар çыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне 90 кун хушши туса пыма палăртнă, хальхи вăхăтра çак вăхăт суя пулни палăрчĕ. Мĕншĕн тесен Ли Сын Манпа Чан Кай-ши агентури тем тĕрлĕ провокациле тата ытти законсăр ĕçсемпе Китайпа Корейăн тыткăнри çар çыннисем хушшинче ăнлантару ĕçне туса пыма тăтăшах чăрмантарнă, халĕ те чăрмантараççĕ.

Ун хыççăн СССР представителĕ репатриаци тĕлĕшпе ĕçлекен комисси Ли Сын Манăн вăрттăн агентĕнчен тытса илнĕ çыру çинчен аса илтернĕ. Çав агент тыткăна лекнĕ çар çыннисен Тонжанниri лагерьне Америка командованийĕ контроллесе тăракан территорирен пырса кĕме хăтланнă. Çак çырура Кăнтăр Корейăри полици начальникĕ тата гоминданăн «посольстви» текенскерĕ лагерьсенче ăнлантару ĕçне чарса пыма кирли çинчен тата репатриациленессишĕн çине тăракан тыткăнри корейцсемпе китаецсене вĕлермелли çинчен инструкци панă пулнă.

А. Я. Вышинский çавăн пекех çак факт çинчен аса илтернĕ: Америка енĕ калаçусене вăраха тăсса пырассишĕн тăрать.

Генеральнăй Ассамблея Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса памă пулăшас тĕлĕшпе хăйĕн умĕнче тăракан тивĕçе пурнăçламасăр тăма пултараймасть. Корея ыйтăвĕ çавăн пекех мире тата тĕнчери хăрушсăрлăха сыхлас тата тĕреклетес ыйтупа çыхăннă. Ку вăл çакна тума хушать: кирлĕ пулсан, Корея ыйтăвне сӳтсе явас шутпа саккăрмĕш сессийĕн ĕçне тепĕр хут пуçлама лайăх условисем тумалла. Вăл условисем Корея ыйтăвне пурнăçлама чăрмантармалла кăна мар, çак ĕçе хăвăртрах тата пĕр чăрмавсăр пурнăçлама пулăшмалла. Политикăлла комитет ячĕпе тăратнă резолюци проекчĕ çак требованисемпе пачах килĕшсе тăмасть.

Çак проектра Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн ĕçне тепĕр хут пуçлама пӳлсе тăракан чылай условисем тума палăртнă.

Çак условисем пирки кирлĕ пек шухăшласа пăхсан, паллă тунă А. Я. Вышинский, çакă уççăн курăнать: ку вăл саккăрмĕш сессийĕн ĕçне тепĕр хут пуçламалли питех те кăткăс йĕрке пулса тăрать. Çакăн пек вăхăтра васкаса, ним тăхтаса тăмасăр ĕçлеме кирлине шута илсен, эпĕ çакăн пек йĕркене кăткăс тесе кăна мар, хăрушă та тесе калăттăм. Ун пек йĕрке ĕçе татса пама пулăшмасть. Пачах урăхла, вăл Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас тĕлĕшпе тумалли мĕнпур ĕçсене чарса лартмалли плана пурнăçа кĕртессине çăмăллатма пултарать.

Ĕçе йывăрлатма тĕллев тытмасан, Корея ыйтăвне сӳтсе явас шутпа саккăрмĕш сессине пухассине çăмăллатассишĕн чăннипех тăрăшас пулсан, резолюци проектĕнчи иккĕмĕш пунктра «Организаци членĕсен ытларахăшĕ килĕшнĕ хыççăн» тенĕ сăмахсене кăларса пăрахмалла. Польша делегацийĕ сĕннĕ тӳрлету ĕçе çăмăллатас тĕллев тытать. СССР делегацийĕ çак сĕнӳ майлă тăрать.

СССР представителĕ юлашкинчен çапла каланă: СССР делегацийĕ хальхи вăхăтра Корея ыйтăвне Генеральнăй Ассамблейăра сӳтсе явассишĕн çине тăмасть пулсан, ăна çапла ăнланмалла: çак ыйтăва сӳтсе явма кирлĕ пулсан, Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн ĕçне кирек хăш вăхăтра та тепĕр хут пуçламалла. Унăн ĕçне тепĕр хут пуçлассине кирлĕ таран çăмăллатмалла, çав тĕллевсемпе Генеральнăй Ассамблея председателĕн правине, саккăрмĕш сесси ĕçне тепĕр хут пуçламалли правăна, нимĕнле условисем кăларса тăратса та хĕсмелле мар. Çавăн пек условисем туса хуни сессин чарăнса ларнă ĕçне тепĕр хут пуçлама чăрмантарма кăна, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас ĕçе пăсма кăна пултарать.

Ун хыççăн Инди представителĕ Менон тухса каланă. Вăл А. Я. Вышинский Корейăра йывăр лару-тăру пулса тăни çинчен каланипе килĕшнĕ. Тыткăнри çар çыннисене репатриацилесси çинчен тăракан ыйтура «пысăк чăрмав пулса тăчĕ», тесе паллă тунă вăл. Менон çавăн пекех çапла каланă: Генеральнăй Ассамблейăн председательне Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн ĕçне тепĕр хут пуçлама мĕнле те пулин условисемпе çыхăнтармасан авантарах пулнă пулĕччĕ. Анчах делегатсенчен нумайăшĕ резолюцин пĕрлехи проектне улăштармасăрах йышăнасшăн.

Ассамблейăн ытларахăшĕ Польша делегацийĕ резолюцин пĕтĕмĕшле проекчĕ çумне тӳрлету сĕннине йышăнман. СССР, УССР, БССР Польшăпа Чехословаки çав тӳрлетӳшĕн сасăланă. Афганистан, Бирма, Саудовски Арави, Сири тата Йемен представителĕсем нихăш майлă та сасăламан. СССР, УССР, БССР, Польшăпа Чехословаки представителĕсем резолюцин пĕрлехи проектне сасăланă чухне нихăш майлă та сасăламан.

Ун хыççăн Ассамблея гоминдан шайкки Бирмăна хирĕç агресси туса пыни çинчен тăракан ыйту тăрăх Политикăлла комитет тăратнă резолюци проектне пăхса тухнă.

Польша представителĕ Кац-Сухи çапла пĕлтернĕ: Ассамблейăна тăратнă резолюци проектĕнче çитменлĕхсем пур пулин те, вăл çак резолюци проекчĕшĕн сасăлĕ. Мĕншĕн тесен Бирма—сӳтсе явакан ыйтăва татса парассипе пуринчен ытларах интересленекен енĕ—ун майлă тăрать.

США представителĕпе гоминдановецсем Генеральнăй Ассамблейăн 1953 çулхи апрелĕн 23-мĕшĕнчи резолюцине пурнăçламаннишĕн тӳрре тухма хăтланнă, йывăрлăхсем шухăшласа кăларнă. Вăл резолюци гоминдановецсен Бирмăри бандисене хĕçпăшалсăрлантарма тата Бирмăран илсе тухма палăртать.

СССР представителĕ Я. А. Малик, сасăлассин сăлтавĕсем пирки тухса каласа, çапла пĕлтернĕ: Совет Союзĕн делегацийĕ Политикăлла комитет тăратнă резолюци проектне хирĕç пĕтĕмĕшле хирĕçлемест. Анчах, тенĕ вăл, СССР делегацийĕ çак проектри пĕр пунктпа килĕшме пултараймасть. Çав пунктра США-на, вăл Чан Кай-шин хĕçпăшаллă вăйĕсене Бирма территорийĕнчен илсе тухас çĕрте тăрăшнăшăн, «тав тума» сĕннĕ. Ун пек калама нимĕнле сăлтав та çук.

Политикăлла комитет хăй тăратнă резолюци проектĕнче, тенĕ Совет Союзĕн представителĕ, хĕçпăшаллă вăйсене Бирмăран илсе тухас ĕç çителĕксĕр пулса пынине тĕрĕс палăртать, Чан Кай-ши çарĕсем хăйсен хĕçпăшалĕсене сахал панă пирки пăшăрханнине палăртать. тивĕçлĕ енĕсене Чан Кай-ши çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарас тата Бирмăран илсе тухас тĕлĕшпе çине тăрса мерăсем йышăнма сĕнет.

Бирма представителĕ çапла пĕлтернĕ: Бирма делегацийĕ Политикăлла комитетăн резолюци проекчĕпе пĕтĕмĕшпех çырлахмасть. Анчах вăл çав резолюци проекчĕшĕн сасăлĕ, мĕншĕн тесен резолюци проекчĕ, тĕрĕссипе илсен, Бирмăна хирĕç агресси туса пынăшăн гоминдан шайккине сивлет.

Бирма представителĕ СССР-па Польша делегацийĕсене, вĕсем çак резолюци проекчĕ майлă тăма килĕшнĕшĕн, тав тунă.

Политикăлла комитетăн резолюцине 56 сасăпа йышăннă. Çав резолюцишĕн вăл шутра СССР, УССР, БССР, Польшăпа Чехословаки делегацийĕсем сасăлана. Гоминдановец сасăланă çĕре хутшăнман.

## Генеральнăй Ассамблея ĕçлеме чарăннă

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 9-мĕшĕнчи пĕрлехи ларура Генеральнăй Ассамблея опекăна кĕрекен территорисенчи лару-тăру çинчен тăракан ыйтусем тăрăх опека ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет тăратнă чылай резолюцисене сӳтсе явмасăрах йышăннă.

Ун хыççăн Генеральнăй Ассамблейăн ытларахăшĕ Японипе Сан-Марино хăйсене Пĕтĕм тĕнчери судăн Статутне хутшăнтарасси çинчен ыйтнисене пурнăçлама Хăрушсăрлăх Совечĕ сĕннине çирĕплетесси çинчен решени йышăннă. СССР, УССР, БССР, Польшăпа Чехословаки делегацийĕсем çак ыйту тăрăх тăратнă резолюци проекчĕсене сасăланă чухне нихăш майлă та сасăламан. Ассамблея Экономикăпа Социальнăй Советăн тата администрацине бюджет ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн хăшпĕр доклачĕсене шута илме йышăннă.

Малалла ООН персоналĕ пирки мĕнле политика тытса пыни çинчен администрацине бюджет ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен комитет тăратнă чылай резолюцисене çирĕплетнĕ. Уйрăммăн илсен, икĕ резолюци йышăннă. Вăл резолюцисем ООН Администраци трибуналĕн персоналĕпе статучĕн положенине улăштарасси тата çĕнĕ пунктсем кĕртесси çинчен генеральнăй секретарь панă сĕнӳсене çирĕплетмелли çинчен калаççĕ. СССР, УССР, БССР, Польшăпа Чехословаки делегацийĕсем çак икĕ резолюцие хирĕç сасăланă. Мĕншĕн тесен вăл резолюцисенче генеральнăй секретаре ООН секретариачĕн сотрудникĕсене çителĕклĕ сăлтавсемсĕрех ĕçрен кăларса яма право панă. Генеральнăй Ассамблейăн ытларахăшĕ генеральнăй секретарь ООН секретариачĕн структурине организацилессине улăштарасси çинчен тунă доклад тăрăх çак комитет тăратнă резолюцие çирĕплетнĕ. СССР, УССР, БССР, Польшăпа Чехословаки делегацийĕсем çак резолюцие хирĕç сасăланă. Вĕсем çавăн пекех тăватă резолюцие хирĕç сасăланă. Вăл резолюцисене бюджет комитечĕн ытларахăшĕ йышăннă. Вĕсене ООН-а 1954 çул валли уйăрнă укçа-тенкĕ ыйтăвĕсем тĕлĕшпе паллă мар тата чрезвычайнăй расходсен сметисе, оборотри укçа-тенкĕ фончĕпе 1953 çул валли хушса тунă смета тĕлĕшпе тăракан ыйтусем тăрăх йышăннă.

СССР представителĕ С. К. Царапкин, сасăлассин сăлтавĕсем тăрăх тухса каласа, çапла пĕлтернĕ: ООН-ăн çултан-çул ӳссе пыракан расхочĕсемпе ниепле те килĕшме май çук, вĕсем Организаци укçи-тенкине перекетлĕ расходламанни çинчен калаççĕ.

Çак ыйтусемпе Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн кун йĕркине пăхса тухасси вĕçленнĕ.

Ассамблея председателĕ Пандит госпожа çакăн çинчен аса илтернĕ: Ассамблея Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн ĕçне чарасси çинчен резолюци йышăннă. Вăл резолюцире Ассамблея председательне çĕршывсен — ООН членĕсен ытларахăшĕ килĕшнĕ тăрăх, Корея тĕлĕшпе тăвакан ĕçсемшĕн кирлĕ пулсан, çак сессин ĕçне тепĕр хут пуçлама сĕннĕ.

Ун хыççăн чылай делегатсем Пандит госпожана Генеральнăй Ассамблейăн саккăрмĕш сессийĕн ĕçне ертсе пынăшăн тав тунă. Хăшпĕр делегатсем ун чухне Ассамблейăн ĕçне пухтанă. Ун хыççăн сесси ĕçĕн итогĕсем çинчен СССР делегацийĕн пуçлăхĕ. А. Я. Вышинский сăмах тухса каланă.

Польша Халăх Республикинче наука учрежденийĕсемпе аслă шкулсен шучĕ ӳссех пырать. Кĕçал Краковра ялхуçалăхĕн аслă шкулне уçнă. Шкулти наука работникĕсем тĕпчев ĕçĕсене анлăн туса пыраççĕ. Болеслав Смык профессор ассистенсен ушкăнĕпе пĕрле ялхуçалăхĕнче çĕнĕ искусственнăй удобренисемпе усă курас тĕлĕшпе ĕçлет.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Б. Смык профессор тата ассистентсем лабораторире.

## Моссовет ячĕпе тăракан театрăн Румынири гастролĕсем

БУХАРЕСТ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Румынире Моссовет ячĕпе тăракан театрăн гастролĕсем вĕçленнĕ. Румынире 23 кун хушши пулса, театр коллективĕ 40 спектакль лартса панă, 30 концерт панă. Театр артисчĕсем Румыни общественноçĕпе 90 хут ытла тĕл пулнă, творчествăлла консультацисем, лекцисем иртернĕ. Совет артисчĕсем Бухарестсăр пуçне Клуж, Тимиошара тата Констанца хулисенче пулнă. Совет искусствин представителĕсене пур çĕрте те ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Румынири центральнăй тата вырăнсенче тухса тăракан хаçатсем Моссовет ячĕпе тăракан театрăн гастролĕсем çинчен материалсем нумай пичетлесе кăларнă. Вăл материалсенче театр артисчĕсен ăсталăхне пысăк хак панă, совет театр искусствин тарăн шухăшлă реализмне паллă тунă.

Моссовет ячĕпе тăракан театр Румынире пулни Совет Союзĕпе Румыни халăхĕсем хушшинчи ӳссе пыракан туслăха уççăн кăтартса паракан демонстраци пулса тăнă.

## Президент Эйзенхауэр ООН Генеральнăй Ассамблейин пĕрлехи ларăвĕнче декабрĕн 8-мĕшĕнче каланă сăмах

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер кăнтăрла иртсен президент Эйзенхауэр Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин пĕрлехи ларăвĕнче сăмах тухса каланă.

Хăйĕн сăмахĕн малтанхи пайĕнче президент Эйзенхауэр çапла пĕлтернĕ: вăл «паян хăйне хăшпĕр енчен çĕнĕ чĕлхепе калаçма тивĕçлĕ тесе шутлать. Вăл, хăйĕн пурнăçĕн пысăк пайне çар службинче иртттернĕскер, çав чĕлхепе нихçан та усă курмасан лайăхрах пулĕ тесе шутлать.

Çак çĕнĕ чĕлхе—атомлă вăрçă чĕлхи».

«Атом ĕмĕрĕ,—тенĕ малалла Эйзенхауэр, — питĕ хăвăрттăн малалла кайса пырать. Çавăнпа тĕнчери кашни гражданинăн çав аталанăвăн уйрăмлăхĕ çинчен, кăштах пулин те, ăнланмалла. Ку вăл пирĕншĕн пуриншĕн те питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Питех те паллă: тĕнчери халăхсем мире пĕлсе шырас теççĕ пулсан, вĕсен хальхи пурнăçăн паллă факчĕсене пĕлсе тăмалла».

Эйзенхауэр çакăн çинчен аса илтернĕ: 1945 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче Пĕрлешӳллĕ Штатсем «тĕнчере чи малтан атомлă бомбăна сирпĕнтерсе пăхнă». Çавăнтанпа «атом вăй-хăвачĕн вăрттăнлăхĕ» Пĕрлешӳллĕ Штатсене кăна мар паллă пулчĕ. Атом вăй-хăвачĕ Великобританипе Канадăна паллă пулнине шутламасан, палăртнă Эйзенхауэр, «çак вăрттăнлăх çавăн пекех Совет Союзне те паллă».

«Совет Союзĕ,—тенĕ США президенчĕ,—пире çакăн çинчен пĕлтерчĕ: юлашки çулсем хушшинче вăл атомлă хĕçпăшал тума анлă ресурссемпе усă курнă. Çак тапхăр хушшинче Совет Союзĕ чылай йышши атомлă бомбăсене сирпĕнтерсе пăхнă, çав шутра, сахалтан та пĕр хутĕнче, термоядернăй реакци никĕсĕ çинче ĕçлекен атомлă бомбăсене сирпĕнтерсе пăхнă». Эйзенхауэр çакна йышăннă: «Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăçан та пулин атомлă бомба тĕлĕшпе монополист пулнă пулсан, халĕ ку монополи темиçе çул каярах пĕтсе ларчĕ ĕнтĕ».

Тĕнчере «икĕ атомлă çĕршыв» пурри çинчен пĕлтерсе, Эйзенхауэр уйрăмах паллă туса каланă сăмахсенче США-н çар вăй-хăватне сăнласа кăтарнă. Çавăнпа пĕрлех вăл çапла çирĕплетсе каланă: США хăйĕн атомлă вăй-хăватне «агрессортан» хӳтĕленес тĕллевпе кăна тăвать, имĕш.

Малалла, «Пĕрлешӳллĕ Штатсем çине атомпа тапăнма» шутлакан «агрессора» чылайăшчен юнаса, Эйзенхауэр çакна йышăннă: «çакăн çинче чарăнса тăни вăл хăранипе чĕтресе тăракан тĕнчере атомлă икĕ пысăк çĕршыва нумай вăхăт хушши пĕр-пĕрин çине усал сунса пăхса тăма пӳрнĕ текен шанчăксăр вывода тепĕр хут çирĕплетни пулĕччĕ, цивилизацие тĕп тума пултарнине шанăçсăр йышăннине пĕлтернĕ пулĕччĕ».

Эйзенхауэр малалла çапла пĕлтерет: США усăллă ĕç тăвасшăн, сĕмĕрессĕн мар»...

«Эпир конференци сĕтелĕнчен пăрăнатпăр тесе никам та калама пултараймасть,—тенĕ малалла Эйзенхауэр.

«Бермуд утравĕсем çинчи пирĕн пĕрлехи пĕлтерĕшнĕнчен, — тенĕ вăл малалла,— сире çакă паллă пулнă: Пĕрлешӳллĕ Штатсем, Великобритани тата Франци Совет Союзĕпе тĕл пулассипе çинчен часах килĕшме пултарчĕç»...

Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви çак канашлу «палăрмалла результатсем патăрччĕ тесе кĕтет. «Вăл результатсем мир тума пулăшмалла, Мир—тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатмалли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул».

Малалла хăйĕн сăмахĕнче Эйзенхауэр Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин 1953 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче йышăннă резолюцие илсе кăтартнă. Вăл резолюцире çапла тума сĕннĕ: «хĕçпăшалсăрланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссин державăсен представителĕсем подкомитет тума килĕшни-килĕшменнине тĕпчесе вĕренмелле. Ку подкомитета çак ыйту пуринчен ытларах пырса тивекен державăсен представителĕсем кĕмелле. Çак подкомитетăн ыйтăва кирлĕ пек татса пама хăтланса пăхмалла, çакăн пек решени пирки тунă доклада Генеральнăй Ассамблейăна тата Хăрушсăрлăх Советне 1954 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тăратмалла».

«Пĕрлешӳллĕ Штатсем, — тенĕ çавна Эйзенхауэр,—ООН Генеральнăй Ассамблейин сĕнĕвне шута илсе, çакă «пуринчен ытларах пырса тивекен» ытти çĕршывсен представителĕсемпе нимĕн тăхтамасăр конфиденциально (вăрттăн) тĕл пулма хатĕр. Тĕлпулура «атомлă хĕçпăшала васкаса туса хатĕрленĕ пирки тăракан ыйтăва «тĕрĕс татса памалла».

Эйзенхауэр çапла хушса хунă: «çак вăрттăн е дипломатиллĕ калаçусене США «çĕнĕ шухăш кĕртĕ». Эйзенхауэр çапла сĕннĕ: «çакă пуринчен ытларах пырса тивекен правительствăсен халех хăйсен уран запасĕсенчен тата çавăн йышши ытти материалсенчен мĕнле те пулин пайне атомлă энерги тĕлĕшпе ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери орган аллине пама тытăнмалла тата малалла та пĕрле парса тăмалла... Пĕрлешнĕ Нацисен хӳттинче кун пек орган туса хурассине эпир шанса тăратпăр.

Хăш çĕршывăн мĕн чухлĕ памаллине, ĕç йĕркине тата ытти ĕçсене «вăрттăн калаçусем» вăхăтĕнче палăртаççĕ. Вăл калаçусем çинчен эпĕ çӳлерех асăннăччĕ...

Атомлă энерги тĕлĕшпе ĕçлекен орган хăйĕн аллине уйăрса панă çĕмĕрĕлекен атомлă тата ытти материалсене пухас, сыхласа хăварас тата хураллас тĕлĕшпе ответлă пулса тăма пултарĕччĕ...

Атомлă энерги тĕлĕшпе ĕçлекен çак органăн тата пысăкрах задачи вăл çĕмĕрĕлекен атомлă материалсене этемлĕхе мирлĕ ĕç валли уйăрса пама май паракан меслетсем туса хатĕрлесси пулĕччĕ...

Пĕрлешӳллĕ Штатсем ытти çĕршывсемпе — «çакă пуринчен ытларах пырса тивекен» çĕршывсемпе пĕрле—атомлă энергипе мирлĕ ĕçре усă курассине хăвăртлатма пулăшакан плансене пурнăçланă çĕре хутшăнма хатĕр пулнă пулĕччĕç.

«Çакă пуринчен ытларах пырса тивекен» çĕршывсем хушшинче, паллах, Совет Союзĕ пулмалла».

Хăйĕн сĕнĕвĕ лайăхрах пулни çинчен каласа, Эйзенхауэр «пĕтĕм тĕнчере юрăхлă инспекципе контроль системине туса хурассине кашнинчех вĕчĕхтерни тата пĕр-пĕрне шанманни чăрмантарать», тенĕ.

Юлашкинчен Эйзенхауэр çакна шанса тăнине палăртнă: унăн сĕнĕвĕ çинче никĕслесе, Пĕрлешӳллĕ Штатсем «вăя кăна мар, çавăн пекех миршĕн тата мире шанса тăнине палăртса тăрĕç». Анчах президент хăйĕн сăмахĕнче атомлă хĕçпăшала чарасси çинчен тăракан ыйту пирки хăйĕн сĕнĕвне палăртман.

## Студентсен конференцийĕ

Пĕтĕм Союзри мире хӳтĕлекенсен V-мĕш конференцийĕ пухăнас вăхăт çывхарнă май Чăваш педагогика институтĕнче «ССР Союзĕ—миршĕн кĕрешекенсен малти ретĕнче» темăпа студентсен наукăлла конференцийĕ пулса иртрĕ.

Конференцире «Мирпе халăхсен хăрушсăрлăхне çирĕплетесси—ССР Союзĕн тулашри политикин тĕп çулĕ», «Совет Союзĕпе Китай Халăх Республикин аслă туслăхĕ—Хĕвелтухăçĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăха хӳтĕлес ĕçри çирĕп хăват» тата ытти темăсем тăрăх та пурĕ 9 доклад итленĕ.

В. ШАЛТАЙКИН.

## Колхозсем ялхуçалăх продукчĕсем сутаççĕ

Районти нумай колхозсемпе колхозниксем, хăйсен государство умĕнчи обязательствисене срокчен пурнăçланă хыççăн, государствăпа кооперацин хатĕрлев органĕсене ялхуçалăх продукчĕсене сутаççĕ.

Çак кунсенче Йăлмаччари Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз Канаш райпотребсоюзĕн хатĕрлев кантурне 2.350 килограмм çĕрулми, 2.377 литр сĕт, 3.035 килограмм тĕрлĕрен пахча çимĕç сутрĕ. Уçырмари «Комбайн» колхоз 11.800 литр ытла сĕт, 13 тонна ытла пахча çимĕç сутнă. Киров ячĕпе тăракан, «Красная Армия», Жданов ячĕпе тăракан, «Мотор», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем те хăйсенчен ытлашши ялхуçалăх продукчĕсене нумай сутрĕç.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем сутса, Мичурин ячĕпе тăракан тата «Комбайн» колхозсем автомашина, ытти колхозсем строительство материалĕсем нумай туянчĕç.

С. АСЛАН.

## Хисеплĕ ĕç

Хĕллехи кунсем. Сил-тăман вĕçтерет-и е шартлама сивĕ тăрать-и, Тимирязев ячĕпе тăракан колхозри письмоносец К. Дьяконова юлташ пĕр кун та килте лармасть. Вăл, сăран сумка çаксa, ялсем тăрăх хаçат-журнал валеçсе пама каять, вĕçĕ яла çитет.

Пĕрре ирхине письмоносеца 64 çулхи колхозник Федор Афонькин хирĕç пулчĕ.

— Хĕрĕм, килес çулшăн хаçатсем çырăнса илесчĕ.—терĕ вăл кăмăллăн.

— Аван. Çырăнма пултаратăр,—терĕ ăна письмоносец. Çав кунах мучи çултăлăклăх «Коммунизм ялавĕ» тата районти «Коммунист» хаçатсене çырăнса илчĕ.

Кăçал хаçат-журнал çырăнакансем нумай. Кĕске вăхăтрах К. Дьяконова юлташ 40 экземпляр «Коммунизм ялавĕ», 35 экземпляр «Советская Чувашия», 30 экземпляр «Самрăк коммунист» тата 20 экземпляр тĕрлĕрен журналсем çырăнтарнă.

Колхозниксем пурте хаçат-журнал çырăнса илесшĕн.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

Етĕрне районĕ.

## Пĕр çемьерен тухнă врачсем

Петр Кириллович Саперов врач пулса 36-мĕш çул ĕçлет. Унăн арăмĕ те—Екатерина Петровна Саперова çак ĕçре 36 çул ĕçленĕ. Вĕсем иккĕшĕ те Хусанти фельдшер-акушер шкулĕнчен вĕренсе тухнă.

П. Саперов юлташ 1918 çултан пуçласа 1929 çулччен Чăваш республикинчи ялсенче фельдшер пулса ĕçленĕ. 1934 çулта Хусанти медицина институтĕнче вĕренсе врач-терапевт пулса тухнă. Ун хыççăн пĕр улшăнмасăр Калининăра врач пулса ĕçлет.

Вĕсен ачисем те ашшĕ-амăшĕ пекех медицина работникĕсем пулса ĕçлеççĕ, кĕçĕнрехххисем врачсем пулма вĕренеççĕ. Хĕрĕсем—Людмилăпа Маргарита 12—13 çул хушши ĕнтĕ медицина ĕçĕнче. Маргарита Петровна Муркаш районенче фельдшерица пулса ĕçлет.

Людмила Петровна хĕрĕ Галя Хабаровск хулинчи медицина институтĕнче V-мĕш курсра вĕренет.

П. Саперов çемйинчен тухнă медицина работникĕсем кашни çулах ашшĕ-амăшĕ патĕнче пулаççĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

## Вкладчиксен йышĕ ӳсет

ПАРАЧКАВ. Ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пынă май вĕсем хăйсен укçитенкине перекет кассисенче упрасси те ӳссех пырать. Район центрĕнчи перекет кассине кĕçал вкладчиксем сĕнĕрен нумай хушăннă, вĕсем перекет кассине 773 пин тенкĕ ытла укçа хунă.

Çапла вара перекет касси вкладчиксемпе вкладсем ӳстермелли çулталăкри задание 420 процент тултарнă.

В. ТОНЫШЕВ.

## Радио кĕртеççĕ

ÇĔРПӲ. Районти «Гвардия» колхоз членĕсен пурнăçĕ çуллен лайăхланать. Ултăмĕш çул кунта радиоузел ĕçлет. Чылай колхозниксен килĕсене радиофикациленĕ. Нумаях пулмасть тата 80 колхозник киле радио кĕртнĕ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРЕНЧЕ — декабрĕн 12-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Не называя фамилий».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК» — декабрĕн 12-мĕшĕнче илемлĕ фильм «Учитель» (çĕнĕ копи).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—6-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09400 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2977. Тираж 20.000 экз.